ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 27
ВЫРСАРНИКУН
№ 20 (8672)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

«Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» памалли тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетра. Тĕнчери Сталинла премие Бразили писательне Жоржи Амадуна пани (1 стр.).

Халăх демократи çĕршывĕсенче (1 стр.).

ПАРТИ ПУРНАÇĔ. А. Медведев.—Администраци ĕçне куллен тĕрĕслени кирлĕ. Х. Лисин.—Лайăх решенисем йышăнаççĕ, анчах вĕсене пурнăçламаççĕ (2 стр.).

А. Николаев, И. Волков.—Тăвай районĕнче вăйлă тырпулшăн çителĕксĕр кĕрешеççĕ (2 стр.).

Г. Артемьев.—Отчетпа суйлав пухăвĕнче (2 стр.).

ССР Союзĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче (3 стр.).

Çул-йĕр работникĕсен республикăри канашлăвĕ (3 стр.).

И. Марков.—Ачасене воспитани парас ĕç—совет общественноçĕн тивĕçĕ (3 стр.).

Шупашкар хулинчи профсоюз активĕн пухăвĕ (3 стр.).

Корейăри ĕçсем (3 стр.).

С. Иванов.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).

Хамăр республика тăрăх (4 стр.).

ХИСЕП ХĂМИ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

21. Муркаш районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Павлов юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Я. Трофимов юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ К. Данилов юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 103,5 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 102 процент тултарнă.

22. Муркаш районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ К. Енисеев юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Г. Михайлов юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ С. Дашков юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 104,7 процент тултарнă. Ку колхоза йывăç туртса кăларма задани паман.

Отчетпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене большевикла пурнăçлар

Республикăри пуçламăш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Вĕсем пур çĕрте те политикăллă тата производствăллă пысăк çĕкленӳпе, партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ политикăллă ĕçсене малалла вăйлатса пырас, республика умне партин Центральнай Комитечĕ кăларса тăратнă задачăсене большевикла пурнăçлама парторганизацисен пĕтĕм вăйне мобилизацилес тĕллевпе иртрĕç.

Иртнĕ çулталăк хушшинче пуçламăш парторганизацисем, уйрăмах пĕрлешнĕ колхозсенчи парторганизацисем, организаципе политика тĕлĕшĕнчен нумай çирĕпленчĕç. Вĕсем колхоз производствин пысăк ытăвĕсене ăнăçлă татса пама пултаракан пулчĕç. Пуçламăш парторганизацисем предприятисемпе колхозсем, машина-трактор станцийĕсемпе учрежденисем умĕнче тăракан хуçалăхлă политикăллă задачăсене вăхăтра пурнăçлама рабочисене, колхозниксене тата интеллигенцие мобилизацилесе пыраççĕ. Парторганизацисен шалти ĕçĕ вăйланни коммунистсен ăнлануллăхне, политикăллă активлăхĕпе производствăри авангардлă рольне ӳстерчĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем ĕçри çитĕнӳсене палăртнипе пĕр вăхăтрах, пуçламăш парторганизацисен, ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен ĕçĕсене хытă критикăларĕç, парти, совет тата хуçалăх органĕсен çитменлĕхĕсене палăртса, вĕсене пĕтерме паха сĕнӳсем пачĕç.

Парторганизацисенчи отчетпа суйлав пухăвĕсенче ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçлас ĕçе большевикла организацилес ыйтусем тĕп вырăнта пулчĕç. Обком пленумĕ республикăри парторганизацисен пысăк çитменлĕхĕсемпе йăнăшĕсене кăтартса панăччĕ. Çав çитменлĕхсемпе йăнăшсенчен чи пысăкки вăл—партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçсене кирлĕ пек йĕркелемени, хуçалăхпа культура строительствине çителĕксĕр ертсе пыни. Обком пленумĕ пулнăранпа вăхăт чылай иртрĕ, анчах хăшпĕр райкомсемпе хула комитечĕсем тата пуçламăш парторганизацисем хăйсен ĕçне ытла та вăрахăн çĕнетсе лайăхлатса пыраççĕ. Çавна пула пирĕн республика вăрман хатĕрлемелли плана вăхăтра тултараймасть, çитес çуракине япăх хатĕрленет, нумай районсенче выльăх-чĕрлĕхе начар пăхса усраççĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем çакна хытă астутарчĕç: ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен пуçламăш парторганизацисене ертсе пырассине хăвăртрах лайăхлатас пулать. Партин хăшпĕр комитечĕсем пуçламăш парторганизацисен ĕçĕсене тĕплĕ пĕлмеççĕ, секретарьсене сахал пулăшаççĕ, семинарсене тăтăш ирттермеççĕ. ВКП(б) Етĕрне райкомĕ иртнĕ çулта мĕн пурĕ те 6 семинар кăна ирттернĕ. Вĕсене те идея тĕлĕшĕнчен вăйсăр ирттернĕ. Райком парторганизацисен паха опытне пĕтĕçтерсе сарса пымасть. Çулталăк хушшинче райком бюровĕнче 5 парторганизаци секретарĕн отчетне кăна сӳтсе явнă. Çавăнпа ĕнтĕ нумай пуçламăш парторганизацисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Чылай çĕрте парти пухăвĕсем уйăхĕ-уйăхĕпе пулмаççĕ, коммунистсене партпоручениесем памаççĕ.

ВКП(б) Чурачăк райкомĕ те пуçламăш парторганизацисене çиелтен кăна ертсе пырать. Райком бюровĕн членĕсем тата ытти ответлă работниксем пуçламăш парторганизацисенче сахал пулаççĕ, вĕсен ĕçне пур енчен те тишкĕрсе тухмаççĕ, секретарьсене партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатма пулăшмаççĕ. Чылай политшкулсемпе кружоксем тăтăш ĕçлемеççĕ, нумай коммунистсем занятисене сиктерсе çӳреççĕ. Парти вĕренĕвĕн пахалăхĕ идейăпа теори тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра тăмасть, вĕренĕве умра тăракан задачăсемпе çыхăнтарса пымаççĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем партиллĕ ĕçĕн нумай ыйтăвĕсене активлă сӳтсе явни, хуçалăхпа культура строительстви енĕпе пысăк ĕçсем тума палăртни, пухусенче большевикла критикăпа самокритикăна хăюллă сарса пыни, ертсе пыракан органсене пултаруллă та пуçаруллă коммунистсене суйлани—çаксем вĕсем парторганизацисен шалти пурнăçĕ вăйланнине, коммунистсен активлăхĕ ӳснине, партин шалти демократийĕ малалла аталанса пынине уççăн кăтартса параççĕ.

Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене, коммунистсем панă сĕнӳсене, вĕсем кăтартса панă çитменлĕхсене тĕплĕ тишкĕрсе тухса, хăйсем валли тивĕçлĕ выводсем тумалла. Отчетпа суйлав пухăвĕсем йышăннă решенисем пуçламăш парторганизацисемшĕн большевикла ĕç программи пулса тăмалла.

Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен пуçламăш парторганизацисене çирĕплетес, вĕсен кĕрешӳри пултаруллăхне вăйлатас ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать. Пуçламăш парторганизацисен, администрацин хуçалăхлă ĕçĕсене тĕрĕслесе тăма панă правăпа анлă усă курса, предприятисен, колхозсен тата МТС-сен ĕçĕсене куллен лайăхлатса пыма тимлĕ тăрăшмалла. Кунпа пĕрлех парторганизацисен шалти пурнăçне вăйлатни, коммунистсен политикăллă вĕренĕвне лайăхлатни тата парти дисциплинине çирĕплетни кирлĕ. Предприятисенчи, колхозсенчи тата МТС-сенчи пуçламăш парторганизацисен производство бригадисенчи парти группиcене çирĕплетес пулать.

Большевикла критикăпа самокритика ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пымалли чи хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Парти руководителĕсен çитменлĕхĕсене кăтартса памалли паха майсенчен пĕри вăл—парти пухăвĕ. Пухусенче парти строительстви ыйтăвĕсем, предприятисемпе колхозсен ĕçĕсем çинчен час-часах сӳтсе явни коммунистсен ăнланулăхне ӳстерет, вĕсен производствăри организаторла тата авангардлă рольне вăйлатать.

Йышăннă решенисене пурнăçланине тĕрĕслесси партиллĕ ĕçре пысăк вырăн йышанса тăрать. Партин ертсе пыракан органĕсен пуçламăш парторганизацисем йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине тăтăш тĕрĕслемелле. Çапла туни кадрсен ответлăхне ӳстерет, парти тата государство хушнă ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пыма лайăх майсем туса парать.

Пирĕн республикăра аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ умĕнче илнĕ обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту куллен вăйланса пырать. Рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ, хуçалăхпа культура строительствинчи пысăк ĕçсене ăнăçлă туса пырас тесе, пĕтĕм вăй-хăвата парса ĕçлеççĕ. Парти организацийĕсен тивĕçĕ вăл—ĕççыннисен социализмлă ăмăртăвне пуçарса пырасси, вĕсене Центральнай Комитет пирĕн республика умне партин задачăсене пурнăçлама мобилизацилесси.

„Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн“ памалли тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетра

Тĕнчери Сталинла премие Бразили писательне Жоржи Амадуна пани

Кремльте, Свердловски залра, «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» памалли тĕнчери Сталинла премие Бразилири паллă писателе, мире сыхласа хăварассишĕн тата çирĕплетессишĕн активлă кĕрешекене—Жоржи Амадуна панă.

Кăнтăрла иртни 2 сехет тĕлне залра общество организацисен—Мире сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн, Совет писателĕсен Союзĕн, фашизма хирĕç кĕрешекен совет хĕрарăмĕсен Комитечĕн, фашизма хирĕç кĕрешекен совет çамрăкĕсен Комитечĕн, профсоюзсен йышлă представителĕсем пухăннă. Вĕсем хушшинче—паллă ученăйсем, писательсем, совет искусствин деятелĕсем, производство новаторĕсем.

Жоржи Амаду зала кĕрсен, ăна хисеплесе нумайччен алă çупаççĕ.

Тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет йышăннă постановлениене вуласа панă хыççăн Комитет председателĕ Д. В. Скобельцын академик Жоржи Амадуна Тĕнчери Сталинла премин лауреачĕн дипломне тата кăкăр çине çакмалли ылтăн медале парать. Вырăсла тата португалецсен чĕлхипе çырнă дипломра çапла каланă: мире сыхласа хăварассишĕн тата çирĕплетессишĕн кĕрешес ĕçре тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунăшăн Жоржи Амадуна «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» памалли Тĕнчери Сталинла премие памалла тунă.

Д. В. Скобельцын академик хăйĕн кĕске сăмахĕнче Жоржи Амадуна пысăк награда илнĕ ятпа сывлăх сунса саламлать.

Премие илнĕ хыççăн Жоржи Амаду хумханулă сăмах тухса калать, зала пухăннисем ăна пысăк тимлĕхпе итлеççĕ.

Мире сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн председателĕ Н. С. Тихонов, Совет писателĕсен Союзĕн правленийĕн секретарĕ А. В. Софронов тата фашизма хирĕç кĕрешекен совет çамрăкĕсен Комитечĕн председателĕн заместителĕ К. П. Орлов саламлă сăмахсем тухса каланă, вĕсем те лауреата чĕререн ырă суннă.

Жоржи Амаду каланă сăмах

Господин председатель! Хаклă тусăмсем!

Тинĕссемпе тусен леш енче, çĕр чăмăрĕн тепĕр енче, манăн инçетри çĕршывăмра миллионшар çынсем миршĕн çунаççĕ, ушăн кĕрешеççĕ. Çак кĕрешĕвĕн условийĕсем çăмăл мар. Бразили халăхĕ тахçантанпах миршĕн кĕрешет. Анчах та вăрçă вутне чĕртекенсемпе пĕр пулнăскерсем, манăн Тăван çĕршывăмăн питне хурлăхпа, асаплăхпа тата вилĕмпе хуплама ĕмĕтленекенскерсем миршĕн тăракансене хирĕç пыраççĕ, хĕсĕрлеççĕ. Миллионшар бразилецсен ячĕпе, манăн халăхăн питех те пысăк пайĕн ячĕпе, эпĕ сире тав тăватăп, мана пысăк чыс тунине ăнланса тата питех те пысăк ответлăха туйса, эпĕ Тĕнчери Сталинла Мир премине йышăнатăп.

Эпĕ çакна ĕненетĕп: манăн вĕçĕ-хĕррисĕр анлă тăван çĕршывăмăра пур çĕрте те—Атлантика океанĕн çыранĕсенче, инçетри, шалти районсенче, пысăк юханшывсен хĕррисенче, вĕçĕ-хĕррисĕр тӳрем вырăнсенче—Бразили патриочĕсем, интеллигенцин паллă представителĕсем тата простой çынсем, çĕршывăн ӳчĕ пулса тăракансем, çак премишĕн чунтан-чĕререн савăнĕç, унпа мухтанĕç. Манăн халăхăм ячĕпе çак премие илме мана пысăк чыс тунă. Ку вăл Бразили халăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçĕсене мирлĕ тата телейлĕ аслă çĕршывра—Совет Союзĕнче кăмăлланине кăтартать. Этемлĕх телейне тăвакан аслă çыннăн мухтавлă ячĕ Иосиф Сталин Генералиссимус ячĕ «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» паракан Тĕнчери премин пĕлтерĕшне, тарăн шухăшне уйрăмах ӳстерет. Тĕнчери мĕнпур халăхсем пекех, Бразили халăхĕ Совет Союзне юратать. Вăл фашизма çĕнтернĕшĕн совет çыннисене тав тумаллине пĕлет. Ку вăл—иртсе кайнине малашлăх çĕнтерни, телей асаплăха çĕнтерни, мир вăрçа çĕнтерни. Бразили халăхĕ Сталин Генералиссимуса, унăн ĕçне юратать. Вăл çакна пĕлсе тăрать: туслăхлă, тулăх та илемлĕ çакă çĕнĕ тĕнчене—аслă Совет Союзне Сталин аллипе тунă. Сталин ертсе пынипе цивилизаци нацистсен варварствине çĕнтерчĕ. Сталин генийĕ мир çулĕсене çутатса тăрать.

Миршĕн пыракан кĕрешӳре Бразили халăхĕ совет халăхĕпе пĕрле пырать. Эсир чунтан-чĕререн миршĕн, коммунизмăн аслă стройкисене пурнăçлама кирлĕ миршĕн тăрăшни савăн пекех Бразили халăхĕн хĕрӳллĕ ĕмĕчĕ пулса тăрать. Пире хамăрăн тăван çĕршывăн прогресĕшĕн мир кирлĕ, мир—шкулсем уçма, больницăсем тума, мир—пире ирĕклĕн сывлама кирлĕ. Хăйĕн тăван çĕршывне тата хăйĕн кил-çуртне юратакан, тӳрĕ кăмăллă бразилецсенчен мире сыхлассишĕн тăрăшман пĕр çын та çук. Кусем вĕсем Стокгольмра йышăннă воззвани çине алă пусна тата Мире сыхламалли килĕшӳ тума чĕнсе калани çине хальхи вăхăтра алă пусакан миллионшар çынсем кăна мар, çавăн пекех халăхсен аслă чĕнĕвĕсем çине тĕрлĕ сăлтавсене пула алă пусайман миллионшар çынсем те пурте вĕсен шухăшне кĕрессĕ. Хальхи вăхăтри тĕнчери ĕçсем умĕнче, çĕнĕ вăрçă хăрушлăхĕ умĕнче, манăн çĕршывăмăн пурнăçĕ çине ĕмĕлке ӳкерекен хăрушлăх умĕнче миршĕн ĕмĕтленни мире сыхласа хăварассишĕн пыракан анлă кĕрешĕве кусать.

Географилле условисене пула, эпир вăрçă вутне чĕртекенсен тылĕнче пулса юлтăмăр. Вăрçă вутне чĕртекенсем Бразилире экономикăпа политика пурнăçĕн тĕп позицийĕсене тытса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн халăха пусмăрлаççĕ. Çапах та, хăрушлăх тухса тăнă май вăраннă халăхăн вăйĕ хĕçпăшал вăйĕнчен, тискер террортан çирĕпрех. Çулталăк ытла ĕнтĕ долларпа атом бомбин хуçисем Бразилири çамрăксене çынвĕлерекен легионне кĕртме, вĕсене Çурçĕр Америка империалисчĕсен Корейăри преступникла ĕçĕсене хутшăнтарма тискеррĕн хĕтĕртеççĕ. Пирĕн салтаксем, хăйсен тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлеме алла хĕçпăшал тытма тивессĕн пĕр хутчен кăна мар хăйсен хăюлăхне тата патриотизмне кăтартса панă. Анчах та Бразили салтакĕсен те, Бразили халăхĕн те преступлени тăвас, ытти халăхсене хирĕç агресси тăвас, вĕлерсе çаратас шухăш çук. Бразили халăхĕ хăй тачă пĕтĕçсе тăнине кăтартса пачĕ, вăл США хуçисене сирсе ячĕ, вăл Корейăри вăрçăна хутшăнма килĕшмест. Ку тарана çитсе те Бразилин пĕр салтакне те Корейăна яман. Эпĕ çирĕп ĕненсе тăратăп: ют çĕршывсен сĕмсĕррĕн хĕсеççĕ пулин те Корейăна салтаксем ярас çук. Ют çĕршывсем çавăн пек хĕснине хирĕç халăх пилĕк аслă держава хушшинче Мире сыхламалли килĕшӳ тума чĕннипе ответлет. Бразили çыннисем тăватă миллион çынна яхăн ĕнтĕ Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ чĕнни çине алă пуснă.

Бразили халăхĕ вăрçа кураймасть, вăл тăрăшнипе çакна тунă: Бразили конституцийĕсем, малтанхисем те, хальхи те, кирек-мĕнле агрессиллĕ вăрçăна та сивлеççĕ. Бразили халăхĕ Совет Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç вăрçасси çинчен шухăш тытма та пултараймасть. Вăрçă пропагандин ирсĕр машини, Совет Союзĕ çинчен элеклеме, ăна халăхсен никама пăхăнманлăхне хăратса тăнă пек кăтартма тунăскер, тĕрĕслĕхе хирĕç тăма вăй çитерес çук. Вăл тĕрĕслĕхе манăн халăх уççăн курса тăрать. Кам пире эксплуатацилет тата хĕсĕрлет, кам пире çуклăха кĕртсе ӳкерет, кам пирĕн çĕршыва колони туса хурасшăн? Кам пирĕн пуянлăха çаратать, кам пирĕн çар базисене оккупацилеть, кам пире хамăрăн аçасен çăварĕнчи çăкăра туртса илсе вăрçă бюджечĕ йышăнтарать, кам пирĕн культурăна каялла ярать, пирĕн ирĕклĕхе пĕтерет, хамăрăн никама пăхăнманлăха хăратса тăрать? Кам пирĕн салтаксен хуçи пуласшăн, кам пире хăйĕн законĕсене, хăйĕн пурнăç йĕркине, хăйĕн расистла шухăшĕсене йышăнтарттарасшăн? Ку вара Совет Союзĕ-и? Кусем вĕсем халăх демократи çĕршывĕсем-и? Пирĕн халăхшăн çакă паллă: социализм çĕршывĕ пирĕн цивилизацие, пирĕн культурăна хăратса тăмасть. Халăх вăл суккăр мар, вăл тĕрĕслĕхе хăйĕн куçĕсемпе курать. Вăл çакна курса тăрать: Совет Союзне айăплакан, ăна хирĕç çапăçма сĕнекен çынсем хăйсем пирĕн тăван çĕршыва оккупацилессине вăйлатса пыраççĕ. Чипер ăс-тăнлă, тӳрĕ кăмăллă пĕр бразилец-патриот та, Бразилин хăрушсăрлăхне кăштах та пулин хăратать тесе, Совет Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене айăплама пултараймасть. Çав вăхăтрах миллионшар тата миллионшар бразилецсем пирĕн политикăллă, экономикăллă тата культурăллă пурнăçа США хутшăннине уççăнрах курма тытăнаççĕ.

Вăрçă вутне чĕртекенсем тытса пыракан пропагандăпа элек машини миршĕн тăракансен юхăмне Совет Союзне хӳтĕлессишĕн пыракан юхăм пек кăтартса пама хăтланать. Анчах та халăхсем нумай пулмасть пулса иртнĕ ĕçсене асра тытаççĕ, вĕсем çакна пĕлеççĕ: ирсĕр нацизма çĕнтернĕ мухтавлă Совет Союзĕ вăйлă. Тăшмансем хăйсен ăссăрлăхĕпе ун çине тапăнас-тăвас пулсан, унăн хăйне хӳтĕлеме вăй çителĕклĕ. Совет Союзĕн хăйне хӳтĕлеме те, тăшмансене çĕмĕрсе тăкма та вăй çителĕклипех пур. Халăхсем çакна пĕлеççĕ: вăрçăшăн тăракансем элекленĕ пек мар, пачах урăхла, Совет Союзĕ мĕнпур халăхсемпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери мире хӳтĕлет, Совет Союзĕ вăл—мир тата хăрушсăрлăх тĕрекĕ. Сталин Генералиссимус Пĕтĕм тĕнчери мир ялавне тытса пынине, вăл миршĕн чи хĕрӳллĕ кĕрешекен пулнине Бразили халăхĕ пĕлсе тăрать.

Чĕререн хумханса, эпĕ хамăн шухăшăмпа хамăн тăван çĕршывăмри тата Латинла Америкăри ытти çĕршывсенчи писательсене чĕнсе калатăп. Мана тивнĕ пысăк чыса вĕсем манпа пĕрле пайлама тивĕçлĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем, культура тăвакансем, мир ĕçне пулăшаççĕ, çынсем пĕр-пĕрне ăнланчăр тесе тăрăшаççĕ. Халăха парăнса тăнăшăн Аргентинăри романист Альфредо Варела тĕрмере хĕн-хур тӳсет, Бразилири романист Педро Мота Лима темиçе çуллăха сулпа айăпланă. Манăн писатель ĕçĕ тăван çĕршывăмри тата Латинла Америкăри ытти çĕршывсенчи тӳрĕ кăмăллă мĕнпур писательсен, тĕнчен прогрессивлă культурăна тăвакансен, пĕтĕмĕшле творчествăн пайĕ кăна пулса тăрать.

Мир ĕçне тата тăван çĕршывăмăн никама пăхăнманлăхне сыхлассишĕн пĕр хăрамасăр тăракан манăн халăх çĕнтересси кĕрӳллĕн ĕненсе тăни мана хавхалантарать. Эпĕ Бразилири миршĕн тăракансем çинчен, мĕнпур йывăрлăхсене пăхмасăр тĕрĕслĕхе халăхăн анлă массисем патне çитерекенсем çинчен шухăшлатăп; Корейăна каяссине хирĕç тăракан çамрăксем çинчен шухăшлатăп; хĕсĕрлесинчен те, тĕрмесене хупассинчен те хăраман Бразилири паттăр хĕрарăмсем çинчен шухăшлатăп; мир ялавне çӳлте тытса тăракан рабочисем çинчен шухăшлатăп; эпĕ миршĕн тăракан мĕнпур бразилецсем çинчен шухăшлатăп, манăн çак самантри чаплăлăха пĕтĕмпех вĕсем патне илсе çитерес килет. Пурте, хăйсен политикăпа тĕн тĕлĕшĕнчен кирек мĕнле шухăшлакансем те, пурте мана илтчĕр. Çавăн пекех мана пĕр çынна чунтан-чĕререн шухăшăмпа чĕнсе калама ирĕк парăр. Çав çын яланах кĕрешĕве ертсе пырать, малашлăха тăвать, çав çын мана мире тата Совет Союзне юратма, Ленинпа Сталина юратма вĕрентрĕ; вăл—ман халăхăн шанчăкĕ. Унăн ячĕ—Луис Карлос Престес.

Мана пысăк чыс тунă. Манăн совет халăхне, унăн çулпуçĕпе учительне, аслă Сталина миршĕн тата халăхсем хушшинчи туслăхшăн пĕр ывăнмасăр, чунтан парăнса кĕрешнĕшĕн мире юратакан Бразили халăхĕн ячĕпе тав тăвас килет. Мир ĕçĕ вăл—çыннăн чи сывăх ĕçĕ, çак кĕрешӳре эпир çĕнтеретпĕр. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

Украинăри совхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарнă

Украина ССР-ĕнчи Совхозсен министерстви республикăри совхозсен продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарнин малтанхи итогĕсене пĕлтернĕ. Виçĕ çуллăх плана мĕнпур йышши выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк енĕпе тултарнă.

Виçĕ çул хушшинче ĕне выльăх шучĕ 80 процента яхăн, сыснасен шучĕ—105 процент, сурăхсен шучĕ—132,3 процент, лашасен шучĕ—52.4 процент, кайăк-кĕшĕк шучĕ—119.2 процент ӳснĕ.

Хальхи вăхăтра Украинăри совхозсен фермисенче вăрçă умĕнхи вăхăтринчен чылай ытларах выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк усраççĕ. (ТАСС).

Халăх демократи çĕршывĕсенче

★

Совет Çарĕ Освенцим лагерĕнчи çынсене хăтарни çичĕ çул тултарнине паллă тăваççĕ

ВАРШАВА, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Польшăра гитлерла Германи тунă Освенцимри концентрациллĕ лагерĕнчи çынсене Совет Çарĕсем ирĕке кăларни çичĕ çул тултарнине уявлама тытăннă.

Варшава хулине ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсен тата политикăллă ĕçсемшĕн тĕрмере ларнă çынсен союзĕн делегацийĕсем Франциренĕн, Италирен, Данирен, Голландирен, Бельгирен, Болгарирен, Румынирен тата Албанирен килнĕ.

Ирĕклĕхпе демократишĕн кĕрешекенсен Польшăри союзĕн главнай управленийĕ заявлени пичетлесе кăларнă, унта çапла каланă: Освенцим лагерĕнче ларнă çынсем январĕн 24-мĕшĕпе 28-мĕшĕсенче Польшăра тĕл пулни ăнсăртран пулса иртекен ĕç мар. Январĕн 27-мĕшĕнче паттăр Совет Çарĕсем, пусмăрта пурăннă халăхсене ирĕке кăларса, вилĕм лагерĕн—Освенцим алăкĕсене уçнăранпа çичĕ çул тулать. Эпир, çав тискер лагерьте хĕн-хур тӳссе пурăннă, арам-аран чĕрĕ юлнă çынсем, пире ирĕке кăларакансене, пире вилĕмрен çăлакансене чĕререн савăнса тав тăватпăр. Халăхсене тискеррĕн пусмăрлакан фашизма курайманни пирĕн чĕрере нихăçан та сӳнмĕ. Освенцим лагерĕнче ларнă çынсен пĕтĕм тĕнчери тĕл пулăвĕ çакăн пек самантра пулса иртет. Америка империалисчĕсем Германин çар вăйĕсене уççăнах вăйлатса пыраççĕ, çак ĕçе Гитлер генералĕсене хутшăнтараççĕ.

Миршĕн кĕрешекенсен юхăмĕн пуçĕнче тăракан хăватлă Совет Союзĕ халăхсен никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхне сыхлать, çĕнĕ вăрçа хĕтĕртекенсене хирĕç кĕрешме пĕтĕм тĕнчери миллионшар ырă кăмăллă çынсене хавхалантарать.

Польшăра ялхуçалăхне механизацилени

ВАРШАВА, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Государство МТС-ĕсемпе кооперацисен машинно-тракторнăй пункчĕсен вырăнĕ Польшăра çултан-çул ӳсет. 1949 çулта çĕршывра 149 МТС шутланнă, 1951 çулта вара—260 пулнă. Вĕсенче 8.345 трактор, 7.000 сноповязалка тата ытти ялхуçалăх машинисем пиншерĕн шутланнă. Çĕршывра малтанхи хут 20 комбайн ĕçленĕ, вĕсене Совет Союзĕнчен илсе пынă.

1951 çулта МТС-сенчи тракторсемпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 2.180 пин гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. 1952 çулта çĕнĕрен çĕре яхăн МТС тăвăççĕ, вĕсем 3.000 трактор, пиншер молотилкăсем тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай илеççĕ. МТС-сем пĕрре çурă хут ытларах ĕç тума тытăнаççĕ.

Çĕршывра çавăн пекех кооперацисен 2.706 машинопрокатнăй пункт шутланать. Иртнĕ çулта вĕсен машинисемпе хресченсен çĕрĕсене 500 пин гектара яхăн сухаланă, 700 пин гектар акнă тата пĕр миллион гектар çинчи тырпула çапнă.

Машина-трактор станцийĕсем уй-хирти ĕçсене организациленĕ чухне те, çавăн пекех хĕллехи вăхăтра машинăсене юсас ĕçре те Совет Союзĕнчи МТС-сен опычĕпе анлăн усă кураççĕ.

Димитровград хулине тунă çĕрте

СОФИЯ, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари Халăх республикинчи социализмла пĕрремĕш çĕнĕ хулана—Димитровград хулине тăвас ĕç анлă сарăлса пырать. Çанталăкăн хĕллехи условийĕсем йывăр пулин те, Димитровградра çĕршыври пысăк предприятие—Сталин ячĕпе тăракан хими комбиначĕпе Вылко Червенков ячĕпе тăракан электростанцие тунă çĕрте рабочисемпе служащисем валли пурăнмалли çуртсем тăвас ĕç пуçланнă. Çавăн пекех кунта хула гимназийĕпе культура дворецĕ тата ытти обществăллă çуртсем тума хатĕрленеççĕ.

Димитровграда тăвакансем 1952 çулта тумалли ĕçсен программине срокчен тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Стройкăсенче ĕçсене хăвăртлатас, материала перекетлес тата строительствăн хăйне ларакан хакне йӳнетес тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту анлă сарăлса пырать. Строительсен Станко Грозданов ертсе пыракан Сталин ячĕпе тăракан, Илчо Илчев ертсе пыракан Павел Корчагин ячĕпе тăракан бригадисем, бетон тунă çĕрте пысăк тухăçлă совет меслечĕпе ĕçлесе, строительствăра пĕр объект тунă çĕрте кăна сур миллион левлăх перекет тунă тата ĕçсен хăвăртлăхне чылай ӳстернĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Администраци ĕçне куллен тĕрĕслени кирлĕ

Етĕрне спирт заводĕнчи пуçламăш парторганизацин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Уйрăмах заводăн хуçалăхлă ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрасеине япăх йĕркеленĕ. Партбюро ларăвĕсенче тата парти пухăвĕсенче хуçалăх ыйтăвĕсене сахал сÿтсе яваççĕ. Парторганизацире критикăпа самокритика хисепре мар.

Партбюро коммунистсен политикăллă тавракурăмне ÿстерес, вĕсене большевикла воспитани парас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçлесе пыман.

Парти ретне илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе те партбюро ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пур. Производствăра лайăх ĕçлекенсене парти ретне илесси начар. Отчетлă тапхăрта пурĕ те пĕр çынна кăна парти ретне илнĕ. Бюро ВКП(б) членĕв кандидачĕсемпе çителĕксĕр ĕçлет. Парти членĕв кандидачĕ А. Соколова юлташ 15 çул ĕнтĕ кандидатра тăрать.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружок, политшкул организациленĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, парти вĕренĕвĕнче çитĕнÿсем пур. Анчах хăшпĕр коммунистсем занятисене сиктерсе çÿреççĕ. Сăмахран, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружокра иртнĕ 8 занятирен Шейн коммунист 6 занятире, Николаев юлташ 4 занятире пулман. Марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен ĕç планĕ çук. Вĕсем мĕнле вĕреннине партбюро пачах тĕрĕслемест.

Завод территорийĕнче лайăх клуб пур. Анчах та клуб культурăпа çутĕç учрежденийĕсем умне лартнă задачăсене тивĕçтереймест. Унта докладсемпе лекцисем сахал пулаççĕ, пултарулăх кружокĕсем пачах ĕçлемеççĕ.

Çавăн пекех партбюро профсоюзпа комсомол организацийĕсен, ирĕклĕ обществăсен ĕçне ертсе пымасть. Бюро хăйĕн ларăвĕсенче ку ыйтăва хутра-ситре кăна сÿтсе явать, ĕçре тивĕçлĕ пулăшу памасть.

Заводри пуçламăш комсомол организацийĕ 23 çамрăка кăна пĕрлештерсе тăрать. Отчетлă тапхăрта комсомол организацийĕнче 4 пуху кăна иртнĕ.

Завод иртнĕ çулхи производство планне тултараймарĕ. Продукцин хăйне ларакан хакĕ пысăк. Партбюро производство планне тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн, продукци хакне йÿнетессишĕн, чĕртавара перекетлессишĕн завод коллективĕ хушшинче кĕрешĕве сарса яман.

Партбюро парти пухăвĕсене ирттерме çителĕксĕр хатĕрленет. Парти пухăвĕсенче йышăннă решенисене тата коммунистсене панă парти поручениййĕсене мĕнле пурнăçласа пынине кирлĕ пек тĕрĕслесе тăни çук.

Отчетпа суйлав пухăвĕнче М. Шмелев юлташ:

— Парти бюровĕ тата унăн секретарĕ В. Черногубов юлташ производство ыйтăвĕсемпе интересленмен, ĕçри çитменлĕхсене пĕлнĕ çĕртех вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем туман. Партбюро секретарĕ коммунистсемпе çыхăнса ĕçлемест,—терĕ.

— Бюро членĕсем хушшинче дисциплина начар. Çавна пула хăшпĕр коммунистсем парторганизаци хушнă ĕçсене кирлĕ пек туса пымаççĕ,—терĕ В. Блинова юлташ.—Мана, стена хаçачĕн редакторĕ пулнă май пĕррехинче бюрона отчетпа чĕнчĕç. Анчах, бюро членĕсенчен виççĕшĕ пыманнине пула, лару пулмарĕ. Коммунистсем стена хаçачĕ кăларас ĕçе хутшăнмаççĕ, редколлеги членĕсем ĕçрен пăрăнчĕç.

— Пирĕн шоферсем,—терĕ С. Симонов юлташ,—автомашинăсене нумайрах усрас, горючи перекетлес тата нумайтарах грузсем турттарас тесе пысăк обязательствăсем илчĕç. Анчах эпир хамăр обязательствăсене мĕнле пурнăçланипе партбюро пачах интересленмест.

А. МЕДВЕДЕВ.

Лайăх решенисем йышăнаççĕ, анчах вĕсене пурнăçламаççĕ

ИШЛЕЙ. Хрущев ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизацинче иртнĕ çулталăк хушшинче 9 пуху пулнă. Çав пухусен протоколĕсене вуласан, парторганизаци хăйĕн ĕçне начар мар туса пырать темелле. Сÿтсе явнă ыйтусем тăрăх яланах ĕçлĕ решенисем йышăннă. Анчах çав решенисене мĕнле пурнăçласа пыраççĕ-ха?

Парторганизацин пĕр ушă пухăвĕнче фермăсенчи выльăхсене хĕл каçарас тĕлĕшпе правлени мĕнле ĕçлени çинчен сÿтсе явнă. Ку вăхăтра колхоз выльăхсем ĕрчетмелли плана тултарман пулнă. Пухура фермăсенче чылай çитменлĕхсем пуррине палăртса, çав çитменлĕхсене кĕске вăхăт хушшинче пĕтерме, çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтерме, выльăхсем ĕрчетмелли плана пур енĕпе те тултарма, апата тирпейлĕ тыткалама тата лайăхлатса çитерме кирлине палăртнă.

Çур çул иртсен парти пухăвĕнче каллех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явнă. Ку чухне те правление выльăхсем ĕрчетмелли плана вăхăтра тултарма, хĕле кĕриччен выльăх витесене юсаса çитерме, государство умĕнчи обязательствăсене ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма хушса хăварнă.

Анчах йышăннă решенисем паян кун та пурнăçа кĕмен. Колхоз хĕле япăх хатĕрленнĕ пирки выльăхсем начарланчĕç, чылай çамрăк выльăхсем вилчĕç.

Колхоз правленийĕ халĕ те выльăхсем ĕрчетес ыйту çине кирлĕ пек пăхмасть. Фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче çирĕп йĕрке туман, вĕсем апата тирпейсĕр расходлаççĕ. Ферма çурчĕсене хутма вутă çук, витесем таса мар. Ĕне витинче кормушкăсем туман. Парторганизаци фермăра ĕçлеме пĕр коммунист та уйăрман. Выльăх пăхакансем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕç туса пымаççĕ.

Калас пулать, партиллĕ-политикăллă тата культурăллă-массăллă ĕçсене вăйлатасси çинчен парти пухăвĕсенче пĕр хут кăна мар сÿтсе явнă. Протоколсем çине пăхсан çакна куратпăр: кашни уйăхра стена хаçачĕ кăлармалла, колхозниксем валли тăтăшах докладсемпе лекцисем ирттермелле. Решени пур, ĕçĕ çук. Çулталăк хушшинче мĕн пурĕ те 3 номер стена хаçачĕ кăна кăларнă тата 4 доклад ирттернĕ. Бригадăсенчи колхозниксем хушшинче каласусем сайра-хутра çеç пулса иртеççĕ. Агитколлектив руководителĕ С. Трофимов юлташ агитаторсемпе семинарсем е канашлусем ирттермест, вĕсене пулăшу памасть.

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче пулнă пухăвăн протоколĕнче çапла çырнă: 1951—1952 çулхи вăрман хатĕрлев планне касас енĕпе 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне, турттарас енĕпе февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне тултармалла тăвас, тенĕ. Аван решени. Çакăншăн парторганизацин çине тăрса ĕçлемелле пулнă ĕнтĕ. Çук, вăл пулмарĕ. Чăн та, ун хыççăн вăрманта 9 çын çуран тата лавпа 5 çын пĕр вăхăт ĕçлесе килчĕç. Унтанпа халĕ пĕр уйăх ытла иртрĕ, анчах вăрмана пĕр çын та тухса кайман. Колхоз касса хатĕрлес енĕпе плана 41,6 процент, турттарса кăларас енĕпе 2,5 процент кăна тултарнă.

Х. ЛИСИН.

Колхозри парторганизаци секретарĕсен курсĕ

ВКП(б) Чăваш обкомĕ колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕсен иккĕмĕш хут пухнă пĕр уйăхлăх курсне ирттерчĕ.

Курсра пулнă секретарьсем ССР Союзĕн тулашри политикипе тĕнчери лару-тăру çинчен, партиллĕ-организациллĕ тата пропагандăпа агитациллĕ ĕçе йĕркелесси çинчен, ялхуçалăхне ертсе пырас тĕлĕшпе парторганизацисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен лекцисемпе докладсем итлерĕç. Докладсемпе лекцисене ВКП(б) обкомĕн секретарĕсем, пайсен заведующийĕсем, министерствăсенчи ответлă работниксем, ялхуçалăх, педагогика, наукăпа тĕпчев институчĕн профессорĕсем, наука работникĕсем, преподавательсем ирттернĕ.

Партиллĕ ĕçре критикăпа самокритика пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ВКП(б) обком секретарĕ Т. Ахазов юлташ, хуçалăхри ĕçе партиллĕ-политикăллă ĕçпе тачă çыхăнтарса çирĕплетсе пырасси çинчен ВКП(б) обком секретарĕ Н. Шмаков юлташ, партин шалти демократийĕн пĕлтерĕшĕ çинчен ВКП(б) обком секретарĕ М. Романова юлташ лекцисем вуласа панă.

Курсра Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз çитĕнĕвĕсем çинчен колхоз председателĕн заместителĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ Апанин юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Пашин юлташ, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз опычĕ çинчен колхоз агрономĕ Васильева юлташ докладсем туса панă.

Нумай лекцисем тăрăх семинарсем ирттернĕ. Вĕсенче парторганизаци секретарĕсем парти строительствин уйрăм ыйтăвĕсем тăрăх тата ĕçри опыт çинчен докладсем тунă.

Юлашки семинара ВКП(б) Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Т. Ахазов юлташ ирттерчĕ. Çак семинарта Сĕнтĕр районĕнчи «Аврора» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Мерлов юлташ, Вăрмар районĕнчи «Маяк» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Кузнецов юлташ туса панă докладсене сÿтсе явнă. Семинарта пулнă нумай секретарьсем асăннă парторганизацисен çитменлĕхĕсене кăтартса панă, хăйсен опычĕпе паллаштарнă. Кайран, прениссене пĕтĕмлетсе, Ахазов юлташ сăмах тухса каланă. Вăл ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас тата выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша ÿстерес тĕлĕшпе парторганизацисем умĕнче тăракан конкретлă задачăсем çинчен тĕплĕ каласа панă.

Канмалли кунсенче курсра вĕренникусем, экскурсисем ирттерсе, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлă заводра, типографире, музейра, художествăллă галлерейăра пулнă.

Ленинград. Агрофизика институчĕн лабораторийĕнче вăйлă çутă пайăркисемпе усă курса, ялхуçалăх культурисене хăвăрт ÿстереççĕ. Лабораторире, çутă çителĕклĕ пулнипе, помидор тунисем çулталăкра улттă хут çимĕç параççĕ, тулă икĕ хут хăвăртрах ÿссе çитет, икĕ çулхи лимон йывăççисем тăват-пилĕк çулхи йывăççем пек курăнса лараççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: лаборатори заведующийĕ биологи наукисен докторĕ Б. С. Мошков профессор çулталăкри лимон йывăççисене пăхать.

Н. КАРАВАЕВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Отчетпа суйлав пухăвĕнче

МУРКАШ. Районти колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пуçланчĕç. Çак кунсенче «Свобода» ялхуçалăх артелĕнче пуху пулса иртрĕ. Пухура правлени отчетне итлерĕç. Правлени председателĕ А. Яриков юлташ большевиксен партийĕ ĕçхресченĕсене пуян та культурăллă пурнăç çулĕ çине илсе тухни çинчен каларĕ, колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетес тĕлĕшпе артель правленийĕ çулталăк хушшинче мĕнле ĕçсем тунине колхозниксене витĕмлĕ цифрăсемпе кăтартса пачĕ. Уйрăммăнах вăл çакна палăртрĕ: колхоз иртнĕ çулта ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата ăнăçлă туса ирттернĕ, государство умĕнчи обязательствăсене срокра пурнăçланă, государствăна 2.400 центнер ытларах сортлă вăрлăх туса панă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те вăйлансах пырать. Иртнĕ çулта çĕнĕрен лаша вити тата чăх-чĕп вити, фермăра ĕçлекенсем валли пÿрт лартнă.

Пухура тухса калакансем йышлă пулчĕç. Колхоз агрономĕ Е. Зайцев, уй-хир бригадирĕсем Г. Бураковпа И. Чиновников юлташсем агротехникăллă ĕçсене тĕрĕс пурнăçласа пыма, ĕç дисциплинине çирĕплетме, 1952 çулта тата вăйлăрах тырпул туса илме чĕнчĕç.

Колхоз умĕнче тăракан задачăсем çинчен сÿтсе явас ĕçе колхозниксем активлăн хутшăнчĕç, çитменлĕхсене кăтартса пачĕç. Вĕсем уйрăмах колхоз правленийĕн малашне выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстересси, кадрсене вĕрентсе воспитани парасси, ялхуçалăх машинисемпе туллин усă курасси, электричество вăйĕпе колхоз производствинче ытларах усă курмалла тăвасси çине тимлĕн пăхма кирлине палăртрĕç. Пуху правленин ĕçне вăтам тесе хакларĕ.

Правлени отчетне сÿтсе явнă хыççăн колхозниксен пухăвĕ правленин çĕнĕ составне суйларĕ. Пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, колхоз председателĕ пулма А. Яриков юлташа суйларĕç.

Правленин çĕнĕ составне колхозниксем чылай сĕнÿсем парса хăварчĕç. Уйрăммăнах пуху правление кăçалхи производство планне туса хатĕрленĕ чухне çĕнĕ строительствăна пысăк вырăна хума хушрĕ. 1952 çулта ĕнесем, пăрусем тата сурăхсем валли çĕнĕрен типовăй çуртсем лартма, урапа-çуна тата ут таврашĕсем тумалли мастерскойсем уçма, фермăсенчи ĕçе механизацилеме, кирпĕч производствине анлăрах сарма йышăнчĕç.

Г. АРТЕМЬЕВ.

Хăмларан—пысăк тупăш

СЕНТĔРВАРРИ. «Молния» колхозра хăмла туса илес тĕлĕшпе ятарласа уйăрнă бригада ĕçлет. Вăл, малтанхи çулсемпе танлаштарсан, хăмла тухăçлăхне иквиçĕ хут ÿстерчĕ. 1951 çулта кашни гектартан 8-шар центнер, уйрăм вырăнсенче—11-шер центнер хăмла пухса кĕртнĕ.

Колхоз государствăна хăмла сутнăшăн 62 пин тенкĕ ытла укçа, 145 центнер тулă илчĕ.

Колхозниксем кăçал тата пысăкрах тухăçлă хăмла туса илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Хăмла вырăнĕ çине тислĕк нумай кăларнă, ытти удобренисем чылай пухса хатĕрленĕ.

П. ГЕРАСИМОВ.

Срокчен параççĕ

Çĕрпÿри селекци станцийĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталта государствăна ашкакай памалли плана срокчен икĕ уйăх маларах 135 процент тултарнă. Çавăн пекех вăл, январь уйăхĕнчи задание тултарнă хыççăн, февраль уйăхĕшĕн государствăна 5 пин литр ытла сĕт панă.

Шупашкарти «Росглаввино» совхозĕ те 1952 çулшăн государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешет. Совхоз пĕрремĕш кварталта государствăна аш-какай памалли плана срокчен 121 процент тултарнă.

Тăвай районĕнче вăйлă тырпулшăн çителĕксĕр кĕрешеççĕ

Вăрлăх хатĕрлесси—паян тумалли ĕç

Вăйлă тырпул туса илес тесен, çитес çуракинче акма чи паха та сортлă вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлемелле. Малта пыракан колхозсем çапла тăваççĕ те. Вĕсем вăрлăх участокĕсенчен пухса кĕртнĕ тырра çийĕнчех тасатса уйрăм амбарсене хунă. Акт çырса вăрлăха кладовщиксен аллине панă. Акă, «Красный Октябрь», Сталин ячĕпе тăракан, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем пур культурăсемпе те сортлă вăрлăх çителĕклĕ уйăрса хăварнă, вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа тасатнă, лабораторире тĕрĕслеттерсе пăхнă. Ку тĕлĕшпе «Сталь», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Çапах та районта вăрлăх хатĕрлес ĕç кирлĕ пек пулса пымасть-ха. «Звезда», «Социализм», «Победа», Киров ячĕпе тăракан колхозсен руководителĕсем ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕн решенийĕсенчен тивĕçлĕ вывод туман, вăрлăх участокĕсем çинчен пухса илнĕ тырра ытти тырăсемпе хутшăнтарса янă. Çак колхозсенче вăрлăхлăх тырра вырăнсăр салатма пăхни те пулнă.

Районти колхозсенче сортлă вăрлăх планпа пăхнă чухлĕ хатĕрлемен. Уйрăмах, нумай çул ÿсекен курăк вăррисем, силос тумалли культурăсемпе тымарçимĕç вăррисем çитмеççĕ. Вунтăватă колхозра çĕрулми, пахча çимĕç тата кантăр вăррисем çителĕклĕ хывман.

Сортлă тырăсемпе курăк вăррисене колхозсен пĕр-пĕринчен улăштарса илмелле. Вăрлăх улăштарас пирки кăтартусем панă, анчах колхозсем ăна епле пурнăçланине ялхуçалăх пайĕ тĕрĕслесе тăмасть. Унта ĕçлекенсем хутсем çырса янипех ĕç пуласса шанаççĕ.

Вăрлăх сортласа тасатас ĕç те юлса пырать. Миçе центнер вăрлăх тасатнине чуххăмăн кăна шутлаççĕ. Январĕн 15-мĕшĕ тĕлне лабораторире тĕрĕсленĕ вăрлăхран çурри ытларах çеç кондицие ларать. Вăрлăх сортласа тасатассипе Маленков ячĕпе тăракан, «Социализм», «25 лет Октября», Горкин ячĕпе тăракан колхозсем уйрăмах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çак колхозсем вăрлăхлăх тырра кĕркунне итем çинче улăмпа арпаран тасатнă та, пирĕн вăрлăх хатĕр, тесе сведени панă. Ун хыççăн вăрлăх патне алă пырса тĕкĕнмен. Ячĕшĕн кăна сортланă вăрлăх, паллах, япăх, акма юрăхлă мар.

Вăрлăх тасатас ĕç юлса пыни вăрлăх сортлакан машинăсемпе тулли усă курманнинчен те килет. Районти ялхуçалăх пайĕнчи сведенисем тăрăх, колхозсенче 28 триер, 76 веялка, 48 сортировка шутланать. Анчах та чылай колхозсенче вăрлăх тасатмалли машинăсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ, хăшпĕр çĕрте вĕсене ахаль лартаççĕ.

МТС-ăн та тырă сортлакан машина пур, унпа кăçал 120 тонна вăрлăх сортламалла. Анчах машинист çук пирки çав машина кĕркуннерехпех «Красное Сормово» колхозра ларать.

Ытти удобренисем те пачах кăлармаççĕ. Ăçтан вара пур çĕрте те тырпул тухăçлăхĕ пĕр тан пултăр?

Агротехникăллă ĕçсене пурнăçлассине хакламанрипех кĕл пухассине пилĕк колхозра кăна, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухассине вара пĕр колхозра çеç йĕркеленĕ. Чылай ялсенче кĕле урама тăкаççĕ, хаклă удобрение çилпе вĕçтерсе яраççĕ.

Районта 10 колхоз уя юр тытма пуçăнман. Юр тытакан колхозсем те çак ĕçе ячĕшĕн кăна тăваççĕ. Щитсем лартса, улăм е çапăран тунă щитсемпе юр тытнине пĕр колхоз хирĕнче те курма çук.

Районта торф нумай. Кăçал чылай пысăк çĕр лаптăкне торфпа çемçетме палăртнă. Çав ĕçе пурнăçлама 14 пин тонна торф кăлармалла. Анчах ку ĕçе те районта ертсе пымаççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозсăр пуçне районти пĕр ялхуçалăх артелĕ те торф кăларма тытăнман.

Колхозсенче минераллă удобренисене хакламанни палăрать. Ку таранччен минераллă удобренисене икĕ колхоз кăна кÿрсе килнĕ. Минераллă удобренисем туянма государство кивçен паракан укçапа та колхозсем усă курмаççĕ. МТС колхозсене удобренисем турттарма пачах пулăшмасть.

Йÿçĕк тăпрасене известкăласси — чи кирлĕ ĕç. Çакна лайăх пĕлеççĕ пулсан та районта известь хатĕрлес вырăнне плансем тунипех çырлахаççĕ. Çак ĕçе тума хĕл вăхăчĕпе усă курма шутламаççĕ.

Плугсемпе сеялкăсене, ялхуçалăх инвентарьне юсасси те вăрах пырать. Плугсемпе культиваторсене 25 процент, сеялкăсене—30 процент кăна юсанă. «Новый путь», «Красная Чувашия», «Победа», «Социализм» колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсама тытăнманпа пĕрех.

Колхоз руководителĕсем машинăсем юсас ĕç начар пынине запаслă пайсемпе кăмрăк çуккипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Кăçал «Сельхозснаб» складне запаслă пайсем çителĕклĕ кÿрсе килнĕ, вĕсене вăхăтра туяннă пулсан халĕ пур колхозсем те машинăсене юсаса пĕтернĕ пулĕччĕç. Кăмрăк пирки те çавнах каламалла. Канаш вăрманпромхозĕ Тăвай районĕнчи вăрманта кăмрăк хатĕрлет. Суту-илÿ организацийĕсен çаврăнăçуллăрах пулни çеç кирлĕ.

Агрозоотехника курсĕсем пирки

Агротехникăпа зоотехника вĕренĕвне районта кирлĕ пек йĕркелемен. Хрущев ячĕпе тăракан «Победа», «Горьковская Коммуна» колхозсенче занятисем план тăрăх иртмеççĕ. «Победа» колхозри курс преподавателĕ Кучеров юлташ час-часах занятисене вăхăтра пымасть е хатĕрленмесĕр пырать. Çавăнпа унăн занятийĕсем питĕ кичем иртеççĕ. Вăл занятисене практикăллă ĕçсемпе çыхăнтармасть, вĕренекенсен пĕлĕвĕсене тĕрĕслемест. Курссенче вĕренекенсем валли литература тата нагляднăй пособисем çителĕксĕр. Горкин ячĕпе тăракан, «Звезда», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче агрозоотехникăна вĕренессине пачах йĕркелемен.

Районта вăйлă тырпул мастерĕсем вуншарăн шутланаççĕ. Иртнĕ çул «Красное Сормово» колхозра Иванова юлташ ертсе пыракан бригада 22 гектар çинче гектартан вăтам шутпа 132-шер пăт ыраш пухса илчĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхозри Мартынов юлташ ертсе пыракан, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри Сергеев юлташ ертсе пыракан бригадăсем, «Сталь» колхозри Якимов юлташ бригади çуллен вăйлă тырпул туса илеççĕ. Республикăра малта пыракан колхозсен вăйлă тырпул туса илес ĕçре пуян опыт пур.

Юлса пыракан колхозсене малтисемпе танлаштарас пулсан—пулăшу кирлĕ. Вĕсенче малта пыракан колхозсен паха опытне анлă сармалла, докладсемпе лекцисем ирттермелле. Камсем ĕçлемелле-ха ку енĕпе? Чи малтанах ялхуçалăх специалисчĕсем. Колхозниксене ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ республикăри колхозсем умне çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче тĕштырă гектартан вăтам шутпа 18 центнертан кая мар, çĕрулми 160 центнер, пĕр çулхи плантаци çинчен 22 центнер кок-сагыз тымарĕ, 6 центнер кантăр сÿсĕ туса илес пирки кăларса тăратнă задачăсем çинчен те тĕплĕн каласа памалла. Ялхуçалăх наукин çитĕнĕвĕсемпе малта пыракансен опытне пропагандăлас ĕçре тата курссен ĕçĕнче çитменлĕхсем пурри районти ялхуçалăх пайĕ (пропаганда енĕпе ĕçлекен работникĕ Г. Куракин юлташ), парти райкомĕн ялхуçалăх пайĕ çак ĕçсене кирлĕ пек ертсе пыманни çинчен калать.

Узловой меслетпе мар, кустарла ĕçлеççĕ

Иртнĕ çул Тăвай МТС-ĕнче тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене бригадăллă меслетпе юсанă. Çавна пула тракторсене тĕплĕн юсаман. Тракторсем йĕркеллĕ ĕçлеменнипе МТС çулталăкри ĕç планне 95 процент çеç пурнăçланă.

Кăçал МТС мастерскойĕнче узловой меслетпе ĕçлеме рабочисем валли темиçе вырăн хатĕрленĕ, узелсен вырăнĕсене те палăртнă. Анчах ку пĕрре те ĕçе узловой меслетпе тунине пĕлтермест. Кунта тракторсене юсас ĕçе иртнĕ çулхи пекех бригадăн-бригадăн йĕркеленĕ. Юсав ĕçне механизаторсем активлăн хутшăнаççĕ пулсан та вĕсен ĕçне йĕркелесе ертсе пыракан çук.

Акă пĕр «СТЗ» трактор сапаланса выртать. Ку трактора Михайлова трактористка нумайранпа юсать, тракторăн пайĕсем те çухалса пĕте пуçланă. Анчах трактористка хăй пĕччен моторăн кăткăс пайĕсене токарнăй станок çинче юсама пултарайман пирки трактор çаплах хатĕр мар.

Кун пек тĕслĕхсем татах пур. Мастерскойĕнче трактор пайĕсем, тимĕр татăкĕсем купаланса выртаççĕ. Контролер-механикăн Г. Васильев юлташăн юсавра кирлĕ приборĕсемпе инструменчĕсем цехсем тăрăх япăхса выртаççĕ. Çавăнпа вăл юсавран тухман кашни трактора çителĕклĕ тĕрĕслесе пăхаймасть. Мастерскойĕнче моторсем тĕрĕслекен стенд та ĕçлемесĕр ларать.

МТС иртнĕ кварталта тракторсем юсамалли плана 50 процент çеç пурнăçларĕ. Январь уйăхĕнче 11 трактор юсамалла пулсан, халĕ пĕр трактор та юсавран тухман.

МТС руководителĕсем ĕç çапла япăх пыни мастерскойри цехсем тăвăр пулнинчен, запаслă пайсем çитменнинчен килет, теççĕ. Ку вăл сăлтав шырани çеç. Фактсем урăхла кăтартса параççĕ. Мастерскойра вырăн çителĕклĕ, кăçал та мастерской валли тепĕр çурт тунă. Иртнĕ кварталта МТС-а запаслă пайсем 180 пин тенкĕлĕх кÿрсе килнĕ. Анчах çирĕп учет пулманнипе запаслă пайсемпе материалсене кирлĕ-кирлĕ мар çĕре расходласа пĕтернĕ.

Юсав ĕçĕсем çителĕксĕр пулса пыни ĕçе кустарла туса пынинчен, кашни машинăна юсамалли çирĕп график çуккинчен килет. Трактористсене куллен задани памани те ĕç тухăçлăхне чакарать, хăшпĕр кун вĕсем ĕçсĕр çÿреççĕ.

Механизаторсем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне кирлĕ пек туса пымаççĕ. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксене вăхăтра кăлармаççĕ. МТС-ра партиллĕ-политикăллă ĕçе те вăйсăрлатнă, директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ В. Макаров юлташ ытларах хуçалăх ĕçĕсемпе интересленет.

Тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсамалли график—закон. Кăçал каллех пĕлтĕрхи йăнăша туни МТС руководителĕсене пĕре те килĕшмест.

* * *

Район суракине хатĕрленес тĕлĕшпе юлса пырать. Çакă вăл райсовет исполкомĕпе унăн ялхуçалăх пайне (заведующийĕ В. Ильин юлташ) хытă пăшăрхантармалла. Анчах та райсовет исполкомĕ суракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явмасть, çитменлĕхсене пĕтерме татăклă мерăсем йышăнмасть. Ялхуçалăх специалисчĕсем çаплах вăхăта канцелярийĕнче ирттереççĕ, колхозсенче пулса çитменлĕхсене пĕтерме кирлĕ пек пулăшмаççĕ.

Партипе правительство пирĕн республикăри ялхуçалăх работникĕсем умне пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратрĕç. Çав задачăсене пурнăçлама мĕнпур колхозниксемпе механизаторсене мобилизацилесси, çĕрĕç культурине ÿстерме мĕнпур майсемпе усă курасси, суракине хатĕрленес ĕçе çак кунсенчех тĕпрен лайăхлатасси—Тăвай районĕнчи партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен чыслă тивĕçĕ.

«Чăваш Коммуни» хасат бригади:

А. НИКОЛАЕВ, И. ВОЛКОВ.

Колхозсенчи ревизи комиссийĕсем çинчен

КОМСОМОЛЬСКИ. Партипе правительство куллен пулăшса пынипе 1951 çулта районти колхозсем пысăк ÿсĕм турĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем тухăçлă тырпул çитĕнтерчĕç, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç.

Тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе—государствăна тырă памалли плана срокчен тултарса çитес çуркунне акма кирлĕ чухлĕ вăрлăх фончĕ хывнă. Колхозниксен ĕçкунĕпе илекен тупăш та ÿсе пырать.

Халĕ колхозсем умĕнче ответлă задача тăрать. Тупăшсене тĕрĕс валеçмелле. Çавна май колхозсем çулталăкри отчетсене çырса хатĕрлес ĕçе хăвăртлатса пыраççĕ.

Çав ĕçре ревизи комиссийĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Колхозсенчи хăшпĕр ревизи комиссийĕсем, ялхуçалăх артелĕн уставне пурнăçласа, правленин пĕтĕм хуçалăхпа укçатенкĕне тĕрĕслес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Халĕ вĕсем çулталăкри отчетсем çырса хатĕрлес ĕçре колхоз правленийĕсене, счетоводсемпе бухгалтерсене тивĕçлĕ пулăшу парса пыраççĕ. Ку енĕпе уйрăмах «Алга», «Заветы Ильича», «Красный борец», Жданов ячĕпе тăракан колхозсенчи ревизи комиссийĕсем паха тĕслĕх кăтартнине палăртмалла. Асăннă колхозсенче ревизи комиссийĕсем кашни кварталта ревизи туса унăн итогне колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче тишкĕрсе тухса çирĕплетеççĕ. Халĕ вĕсем инвентаризаци туса пĕтернĕ, 4-мĕш кварталти ревизине вĕçленĕ.

Чылай колхозсенчи ревизи комиссийĕсем ялхуçалăх артелĕн Уставĕ хушнă пек ĕçлемеççĕ. Устава час-часах пăсаççĕ. Ку енĕпе уйрăмах Пушкин ячĕпе тăракан колхозри ревизи комиссийĕ япăх ĕçленине палăртмалла. 1951 çулта колхозра пĕр ревизи те туман. Ленин ячĕпе тăракан колхозри комисси те çулталăк хушши ревизи туман. Ревизи комиссийĕ ĕçлеменнине пула, 1951 çулхи пĕрремĕш çур çулшăн ялхуçалăх пайĕнчев пырса ревизи тунă, анчах унăн актне колхозниксен пухăвĕнче вуласа паман. Çакна та каламалла: колхоз правленийĕ иртнĕ çулсенче укçа-тенкĕ чылай салатса пĕтернĕ. Тĕрлĕ çынсенчен мĕн пурĕ 20 пин тенке яхăн укçа илмелле. Çав укçана шырасси илесси çинчен колхоз правленийĕ те, ревизи комиссийĕ те аса та илмеççĕ. «Ленинская победа», «Родина» колхозсенче те сайра хутра çеç ревизи тăваççĕ.

Иртнĕ çул ревизи комисси председателĕсене (10 çын) заочно вĕрентмелле пунă. Тăвата çынна заочно вĕренме çырăнтарнă те савăнпа лăпланса ларнă. Вĕсем мĕнле вĕреннине тĕрĕслемен. Сăмахран, В. Хораськин юлташ заочно вĕренме пулнă, анчах вăл пĕр контрольнăй ĕç те пурнăçламан.

Н. КВАСОВ.

Çул-йĕр работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта çул-йĕр работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу 1951 çулхи çул-йĕр строительствин итогĕсем тата 1952 çулхи строительство планĕ çинчен Чăваш АССР Çул-йĕр управленийĕн начальникĕ Рунгш юлташ тунă доклада итлесе сÿтсе явре.

— 1951 çулта,— тет докладчик, — çул-йĕр работникĕсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, Тăван çĕршыв экономикине малалла аталантарассишĕн, тĕнчери мире тĕреклетессишĕн хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлерĕç. Халăх хуçалăхĕ пысăк кăвăртлăхсемпе аталанни, автомашинăсен хисепĕ тăтăш ÿсни çул-йĕр органĕсем умне пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратаççĕ. Социализмлă хулапа колхозлă ял хушшинчи экономикăллă çыхăнăва тата ытларах çирĕплетесси, ялхуçалăхĕ валли машинăсемпе удобрени, строительство материалĕсем, ĕççыннисем валли — куллен кирлĕ таварсем çителĕклĕ тата татти-сыпписĕр кÿрсе килесси, предприятисем туса хатĕрленĕ продукцие вăхăтра ăсатасси—çаксем вĕсем пурте çулсен пахалăхĕнчен сахал мар килеççĕ.

1951 çулта чул сарса çĕнĕ çул тăвас тата киввисене тĕпрен юсас, кĕперсем тăвас тата киввисене юсас тĕлĕшпе уйрăмах Сĕнтĕрвăрри, Тăвай, Муркаш, Вăрмар, Чкаловски районĕсем паха тĕслĕхсем кăтартнă. Иртнĕ çулхи плана пĕтĕмĕшпе 16 район ăнăçлă тултарнă. Машинăсемпе çул тăвакан станци (МДС) 10 километр тăршшĕ чул сарса çĕнĕ çул тунă.

243-мĕш участокри Слесарев мастер çула пĕрмай юсавлă тытать, пур ĕçе те вăхăтра, пысăк пахалăхпа тăвать. Унăн дистанцийĕнчи çул тăрăх автомашинăпа хĕлĕн-çăвĕн татти-сыпписĕр çÿреççĕ. Косарев, Андреев, Лаврентьев мастерсем те плана пур кăтартусем тăрăх та ирттерсе тултарнă. Степанов ремонтер юр тасатмалли кĕреçе-катмак шухăшласа кăларнă. Ку хатĕр ĕç тухăçлăхне ик-виç хут ÿстерет.

Ĕçре уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн Çул-йĕр управленийĕпе çул-йĕр работникĕсен профсоюзĕн обкомĕ 589 çынна Хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Çав вăхăтрах, ик-виç çул каярах малта пынă Елчĕкпе Етĕрне районĕсем чул сарса çĕнĕ çулсем тумалли плана чылай тултарман. Уйрăмах Кувакино, Куславкка, Советски, Элĕк, Ишлей, Октябрьски тата Красноармейски районĕсенче кĕперсем тăвас тата киввисене юсас ĕçе хакламаннине палăртас пулать. Куславкка районĕнче пĕр кĕпер те туман. Чылай районсенче кĕперсем кивелнĕ, автомашинăсемпе çÿреме хăрушă, иçсетрен çаврăнса кайма тивет. Советски районĕнчи çул-йĕр пайĕ кĕперсем тума уйăрса панă вăрмана тÿлесе илмен.

СССР Министрĕсен Совечĕ 1948 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, материалсем турттарма предприятисемпе учрежденисен машинисене те хутшăнтармалла. План тăрăх автомашинăсемпе пурĕ 22,5 пин кубометр чул турттарса кăлармалла пулнă, чăннипе 5,3 пин кубометр çеç турттарса кăларнă. Йывăçпа хăйăр тата грави турттармалли плана та чылай тултарман. Советскипе Канаш районĕсенче тĕрлĕ организацисен автомашинисемпе пачах усă курман. Хăшпĕр предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем çул-йĕр строительстви валли материал турттармалли плана çулсерен тултармаççĕ.

Кăçал çул-йĕр органĕсем умĕнче ответлă та пысăк задачăсем тăраççĕ. Пурĕ 345 километр тăршшĕ çул, 4.400 метр тăршшĕ кĕпер çĕнĕрен тумалла тата киввисене тĕпрен юсамалла. МДС-ăн Етĕрнепе Çĕмĕрле хушшинче 8 километр тăршшĕ çĕнĕ çул тумалла. Кунсăр пуçне унăн Çĕмĕрле хулинче чылай çула юсамалла. Пĕлтĕр Канашпа Çĕрпÿ хушшинче сăнамалла вак чула çĕр кăмрăк тикĕчĕпе хутăштарса чул çине сарнă. Кăçал çавăн пек çул икĕ километр тăршшĕ тума палăртнă. План тăрăх уйрăмах Шупашкарпа Вăрнар, Канашпа Тăвай, Канашпа Елчĕк, Патăрьелпе Шăмăршă, Калининăпа Элĕк, Советскипе Етĕрне, Сĕнтĕрпе Ильинка, Сĕнтĕрвăррипе Çĕрпÿ, Красноармейскипе Çĕрпÿ, Вăрмарпа Çĕрпÿ, Первомайскипе Чкалово хушшинчи çулсем çинче пысăк ĕçсем тумалла. Çулсем хĕррине йывăç лартас, çырма-çатрасене тĕреклетес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тума тивет.

Çулталăкри плана тултарма 21 пин кубометр пĕрене, 55,5 пин кубометр чул, 96 пин кубометр хăйăр, 10 пин кубометр ытла грави тата шлак кирлĕ пулать.

Малта пыракан районсен опычĕ çакна кăтартать: строительство планне ăнăçлă тултарасси материалсем—чулпа хăйăр, пĕрене хĕлле турттарса хунинчен нумай килет.

Малта пыракан колхозсем пур ĕçе те план тăрăх туса пыраççĕ. Вĕсем çул çинче ĕçлеме бригадăсем уйăраççĕ. Ку бригадăсем хĕлĕн-çăвĕн çул çинче ĕçлеççĕ,—материалсем турттараççĕ. Ятарласа бригада уйăрнипе ытти колхозниксене çул ĕçĕпе чăрмантармаççĕ. Бригада уйăрни тата çак енчен те усăллă: колхозниксем ĕçе лайăх хăнăхса çитеççĕ, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăваççĕ. Çак паха опытпа усă курса, кашни колхозрах ятарласа çул-йĕр бригади уйăрса çирĕплетес пулать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çак кварталта материалсем хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли план çирĕплетнĕ. Çул-йĕр органĕсемпе райсовет исполкомĕсен çав плана ăнăçлă тултарма татăклă мерăсем йышăнас пулать. Кашни ял Совечĕн, колхозăн материалсем хатĕрлеме тата турттарма ĕç вăйĕ кирлĕ чухлĕ уйăрмалла. Материалсем турттарма предприятисемпе учрежденисен автомашинисене те хутшăнтарас пулать.

Правительство йышăннă тăрăх тырă турттармалли çулсене хĕлле юртан тасатса тăмалла. Çул-йĕр управленийĕпе районсенчи çул-йĕр пайĕсем Канашпа Шăмăршă хушшинчи çул çине юр çуса тултарасран хÿтĕлеме щитсем туса хатĕрлемен, юр çунă хыççăн çула çийĕнчех тасаттарма тăрăшмаççĕ. Çавăнпа ку çул тăрăх автомашинăсем чылайранпа йĕркеллĕ çÿреймеççĕ.

Доклад тăрăх 15 çын тухса каларĕ.

МДС директорĕ Подклетнов юлташ станци коллективĕ пуян техникăпа туллин усă курассишĕн, çулсен пахалăхне лайăхлатассишĕн ăмăртса ĕçленине палăртать. Пĕр-ик çул хушшинче коллективра ăста бульдозеристсем, скреперистсем, грейдеристсем тата ытти механизаторсем ÿссе çитĕннĕ. Вăл каланă тăрăх, пĕлтĕр чул çитменнипе механизмсем 25 кун ахаль тăнă. Вăл Çул-йĕр управленине Вăрмарти чул хатĕрлекен предприяти ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнманшăн критикăлать.

— Строительство планне ăнăçлă тултарасси, ĕç пахалăхне лайăхлатасси кадрсенчен килет,—тет 243-мĕш çул-йĕр участокĕнчи инженер Маслов юлташ. Вăл уйрăмах колхозсенчи бригадирсене вĕрентме кирлине палăртать. Хăшпĕр районсенче чул сарма пĕлекен, кĕпер тума пултаракан рабочисем сахал. Ăста рабочисем вĕрентсе хатĕрлеме, кадрсен пĕлĕвне ÿстерме курссем, семинарсем организациленĕ кирлĕ. Маслов юлташ Çул-йĕр управленийĕпе районсенчи çул-йĕр пайĕсем çулсем хĕррине йывăç лартас, лартнă йывăçсене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртать.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи çул-йĕр пайĕн техникĕ Федоров юлташ хăйсен опычĕ çинчен каласа парать.

— Пирĕн район плана çулсерен ирттерсе тултарать. Çакă вăл районти пĕтĕм партипе совет общественноçĕ ку ыйтупа интереслениинчен, колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлă сарăлнинчен килет,—тет Федоров юлташ.

— Задание ăнăçлă тултарасси,—тет вăл малалла,—ĕçе тĕрĕс планланинчен, колхозсен экономикине, ăстаçăсем пуррине шута илнинчен сахал мар килет. Хăшпĕр колхозсенче чул хатĕрлеме, тепĕр колхозсенче—чул сарма, виççĕмĕшсенче—кĕпер тума лайăх пĕлекен çынсем пур. Колхозсене задани панă чухне çав уйрăмлăхсене шута илни кирлĕ. Федоров юлташ каланă тăрăх, районта 500 кубометр чул хатĕрленĕ, 300 кубометр турттарса кăларнă.

— Çул-йĕр работникĕсен ĕçне пĕтĕм халăх курать тата хаклать,—тет Çул-йĕр управленийĕн главнăй инженерĕ Сергадеев юлташ. Автомашинăсем хăвăрт пынă чухне пире ырă кăмăлпа асăнаççĕ. Паха тунă çул нумая тÿсет, автомашинăсене, горючие перекетлеме пулăшать. Çул япăх пирки автомашина хăвăртлăхĕ сехетре пĕр километр чакни те халăх хуçалăхне 30 тенкĕ сиен кÿрет,—тет оратор Вăл канашлу участникĕсене пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тума чĕнет.

Канашлу участникĕсем 1952 çулхи çул-йĕр строительстви планне Октябрьти Социализмлă Аслă революци 35 çул тултарнă кун тĕлне пурнăçлама, ĕç тухăçлăхне 13.2 процентран кая мар ÿстерме, строительство хакне, сметăра палăртнипе танлаштарсан, 4 процентран кая мар чакарама, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тума, механизмсемпе тулли усă курма социализмлă обязательство йышăнчĕç, Тутар республикинчи çул-йĕр работникĕсене ăмăртăва чĕнчĕç.

Ачасене воспитани парас ĕç— совет общественноçĕн тивĕçĕ

Вĕренÿ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕ вĕçленчĕ. Иртнĕ тăватă уйăх хушшинче хастарлă, пултаруллă ачасем нумай пĕлÿ илчĕç.

Манăн, ватă учителĕн, пĕр йышши ачасемшĕн чĕрем ыратать. Пирĕн чылай шкулсенче вĕренÿ пахалăхĕ, воспитани парас ĕç тивĕçлĕ вырăнта тăрать теме çук-ха. Ĕлкĕрсе пырайман ачасен шучĕ пысăк. Çак çитменлĕх çинчен учительсем, ачасен ашшĕ-амăшĕсем час-часах сÿтсе явмалла. Ачасене воспитани парас ĕç—совет общественноçĕн тивĕçĕ.

Сталинла Конституци пире вĕренÿ прави панă. Пирĕн ачасене вĕрентме мĕн кирли пур те пур. Партипе Совет правительстви ачасем валли кашни ялтах тенĕ пек шкулсем уçса панă. Кашни районтах темиçе вăтам шкул ĕçлет.

Шкул вăл—кадрсене хатĕрлеме пулăшакан вучах.

Ачасем пурте вĕренÿре ĕлкĕрсе пырасси пуринчен ытла учительтен килет. Коммунизмăн пулас строителĕсене воспитани парасси ашшĕ-амăшĕсенчен те нумай килет. Ачасем шкулта 4—6 сехет кăна пулаççĕ, килĕсенче вара 18—20 сехет хушши пулаççĕ.

Çак ыйтăва пирĕн районсенчи тата республикăри хаçатсем те сахал çутатаççĕ. «Чăваш Коммуни» тата «Советская Чувашия» хаçатсем çинче вĕренÿпе воспитани çинчен çырнă статьясем «аллă кун та паллă кун» анчах пичетленеççĕ.

Пирĕн республикăра темиçе пин учитель ĕçлет. Вĕсенчен вĕренÿпе воспитани ĕçне лайăх пурнăçласа пыракансем те сахал мар. Çавăн пек паллă учительсем хăйсен çитĕнĕвĕсем çинчен сахал çыраççĕ.

Эпир тепĕр чухне вак-тĕвек кăлтăксене вăхăтра сиссе критикăлатпăр, анчах хăш чухне пысăк кăлтăксене те сисместпĕр е сиссен те «ку мана тивмест-ха», тесе чĕнмесĕр иртсе каятпăр. Патша саманинче ирĕксĕрех «каланă сăмах—кĕмĕл, каламанни—ылтăн», темелле пулнă пулсан, совет çыннисем: «Тĕрĕссипе каланă сăмах—ылтăн», темелле.

Эпир çав тери телейлĕ çĕршывра пурăнатпăр. Ваттисене пăхсан—вилес килмест, çамрăксене пăхсан—ватăлас килмест. Пирĕн çĕршыв çулсерен анчах мар, куллен тĕлĕнмелле паллă çитĕнÿсем тăвать. Коммунизм тума, çав телейлĕ обществăра пурăнма, ĕçлеме пире нумай вĕреннĕ, лайăх воспитани илнĕ, пур тупмĕшсенчен те хăтăлнă çынсем кирлĕ. Çавăн пек çынсене хатĕрлемелле те ĕнтĕ учительсен, ачасен ашшĕ-амăшĕсен.

Фабрикăсемпе заводсенче «пăрахăç» сăмаха манса пыраççĕ. Хăшпĕр шкулсенче вара çак сăмах ăшă йăва çавăрнă, йăлана кĕнĕ. Çав йăлана пĕр шеллемесĕр аркатмалла. Ачасем класран класа куçаймасăр юлни питĕ пысăк çитменлĕх. Пĕр класрах икĕ çул ларасси пуринчен ытла шкулти дисциплина тивĕçлĕ вырăнта пулманнинчен килет. Пĕр класрах икĕ çул ларакансем чылайăшĕ дисциплинăна пăсаççĕ. Вĕсемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕсем те шкул çине, учительсем çине пÿрне витĕр пăхма тытăнаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсен шухăшĕ ачисен çине куçать. Çавăн пек ачасем вара хăйсем те вĕренмеççĕ, юлташĕсене те вĕренме чăрмантараççĕ тата шкул йĕркисене пăсаççĕ.

Чăх айне 20 çăмарта хурса пуринчен те чĕпĕ тухсан—килхуçи арăмĕ мĕнле савăнать, çавăн пекех учитель те 30 ача илсе пурне те ăнăçлă вĕрентсе кăларсан шутсăр савăнать. Çавăн пек савăнăçа вăл, паллах, ачасен ашшĕ-амăшĕсем пурте пулăшнипе анчах курма пултарать.

Тăрăмри 7 çул вĕренмелли шкул вĕренÿпе воспитани ĕçĕ ăнăçлă пырать, тесе мухтанма пултараймасть. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче тепĕр класа куçаймасăр юлнă ачасем вĕренÿпе воспитани ĕçĕнче пысăк чăрмав кÿреççĕ, халиччен лайăх вĕреннĕ ачасене пăсма пăхаççĕ, учительсен ĕçне те йывăрлатаççĕ.

Ачасен те, ашшĕ-амăшĕсен те яланах малалла пăхмалла. Шкулта вĕренекен хăшпĕр ачасем çапла калаççĕ: «Манран начар вĕренекенсем те пур-ха»,—теççĕ. Ку йăнăш шухăш. «Эх, манран лайăх вĕренекенсем нумай-ске, çавсемпе танлашасчĕ»,—тени кирлĕ.

Шкулпа çемье пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлесен кăна вĕренÿпе воспитани ĕçне ăнăçлă туса пыма пулать. Хăйсен ачисене лайăх çитĕнтерме тăрăшакан ашшĕ-амăшĕсем ачасене вĕренме лайăх условисем туса параççĕ. Çав вăхăтрах хăйсем те ачисемшĕн авторитетлă, примерлă пулма тăрăшаççĕ: ачасем умĕнче хархашмаççĕ, киревсĕр сăмахсем каламаççĕ, çапăçмаççĕ тата ытти те.

Хăшпĕр ашшĕ-амăшĕсем ачисене воспитани парас ĕç çине тÿнтерле пăхаççĕ. Вĕсем хăйсен ачисене апат çинĕ тата çывăрнă вăхăтра анчах кураççĕ. Ун пек çынсемшĕн ачи табак туртни, урамра, клубра иртĕнни, ваттисене хисеплеменни, уроксене вĕренменни нимех те мар, вĕсен чĕрисем ыратмаççĕ.

Комсомолпа пионер ĕçĕ, илемлĕ литература вулани, кино курни, радио, докладсем итлени—çаксем пурте ачасене лайăх воспитани пама пулăшаççĕ. Çак ĕçе шкул ачисем хушшинче яланах туса пымалла.

Ачасене вĕрентес, коммунистла воспитани парас ĕç çине халĕ нихçанхинчен тимлĕрех пăхас пулать. Шкулсен ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе тачăрах çыхăну тытмалла. Вĕсем валли вĕренÿпе воспитани çинчен ятарласа лекцисем туса памалла. Учительсен хăйсене шанса панă ачасемшĕн ырми-канми ĕçлемелле.

Ачасен ашшĕ-амăшĕсен шкул çине, ачасене коммунистла воспитани парас ĕç çине тивĕçлĕ куçпа пăхмалла. Вĕсенче пысăк шанăç. Вĕсем çителĕклĕ пулăшсан кăна эпир, совет учителĕсем, партипе правительство шанса панă ĕçе чыслăн пурнăçлама пултарăпăр.

И. МАРКОВ,
РСФСР шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ.

Шупашкар хулинчи профсоюз активĕн пухăвĕ

Январĕн 25-мĕшĕнче Советсен çуртĕн пысăк залĕнче Шупашкар хулинчи профсоюз активĕн пухăвĕ пулчĕ. Пуху ВЦСПС-ăн VII-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен Чăвашоблпрофсовет председателĕ Ф. Романов юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

Докладчик 1951 çулта Шупашкар хулинчи предприятисенче коллективлă договорсене ытти çулхисенчен лайăхрах пурнăçа кĕртсе пыни, хулари чылай фабрикăсемпе заводсем иртнĕ çулхи производство планне срокчен тултарни, плантан ирттерсе Тăван çĕршыва миллионшар тенкĕлĕх продукци туса пани çинчен каларĕ. Предприятисенче ĕçлекенсем пурте пекех социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Кунпа пĕрлех докладчик тир-сăран комбиначĕ, лента тĕртекен фабрика тата тумтир çĕлекен 1-мĕш индпошив мастерскойĕ çулталăк планне пĕтĕмĕшпе илсен тултарнă пулин те, плана ассортиментсем енĕпе тултарманни, пир-авăр комбиначĕн строительствипе ытти хăшпĕр фабрикăсемпе заводсенчи профсоюз организацийĕсем плана тултарассишĕн çителĕксĕр тăрăшни çинчен каларĕ.

Романов юлташ докладра фабрикăсемпе заводсенчи, учрежденисемпе организацисенчи профсоюз активне ертсе пырас ĕçе лайăхлатасси çинчен тĕплĕ каларĕ. Юлашкинчен вăл предприятисенче кăçалхи производство планне срокчен тултарассишĕн, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн, чĕртаварпа электроэнерги перекетлессишĕн социализмлă ăмăрту вăйлă сарăлса пынине палăртрĕ. ВЦСПС-ăн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлеме чĕнчĕ.

Прениre 10 çын тухса каларĕ.

Профсоюз активĕн пухăвĕ ВЦСПС-ăн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн активлă кĕрешме йышăнчĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче

Хула çĕнелсе илемленет. Республикăри ватă хуласенчен пĕри — Сĕнтĕрвăрри çулсерен çĕнелсе илемленсе пырать. Иртнĕ çулта кунта 8 хваттерлĕ çĕнĕ çурт туса лартнă, 4 çурта тĕпрен юсанă. Хулари Хĕрлĕ площадьре 1951 çулта чул сарнă.

Государство рабочисемпе служащисене хăйсем валли пурăнмалли çуртсем тума кивçен укçа парса пулăшать. Çак пулăшупа усă курса, хулари рабочисемпе служащисем иртнĕ çулта 73 çурт туса лартнă.

Кăçал хула хуçалăхне лайăхлатма пĕлтĕрхинчен ытларах укçа пама палăртнă. Кивĕ çуртсене нумай юсаççĕ, çĕнĕрен темиçе çурт тăваççĕ, хула урамĕсене чул сараççĕ.

Колхоз хăма çурмалли рама лартнă. Паникассинчи «Социализм» колхоз общественнăй хуçалăха çултан-çул вăйлатса пырать. Колхозниксем 1951 çулхи ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕç. Вĕсем çĕнĕ çул тĕлне государство умĕнчи пур парăмсене те тÿлесе татнă. 1952 çулта общественнăй çĕнĕ çуртсем нумай тума палăртнă. Хăма чылай кирлĕ пулать. Çавăнпа колхоз хăма çурмалли рама лартма йышăннă. Рама январĕн 15-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл кашни кун 16-шар кубометр хăма çурса кăларать. Халĕ çуракан хăма колхоз кăçал тума тытăннă çĕнĕ клуб строительствине каять. Клуб 500 çын вырнаçмалăх пулать.

Киноаппаратсене вырăнтах юсаççĕ. Киноаппаратсем пăсăлсан, вĕсене юсама Шупашкара илсе каймалла пулнă. Хулари кинотеатрти главнăй механик В. Кузнецов юлташ пуçарнипе, кăçал киноаппаратсем юсакан мастерской тунă. Халĕ кирек мĕнле киноаппарата та вырăнтах юсаççĕ.

Кинотеатр çуртне нумай лайăхлатнă. Çĕнĕ фойе тунă, 500 пукан ытла туяннă.

Лайăх ĕçлекен агрозоокурссем. Колхозсем валли массăллă кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме уçнă агрозоотехника курсĕсем иккĕмĕш çул ĕçлеççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозри агрокурс уйрăмах лайăх ĕçлет. Кăна колхозри агроном Дмитриева юлташ ертсе пырать. Занятисем кашни эрнере пĕрре пулаççĕ. Курсра вĕренекенсем валли учебниксем, наглядлăй пособисем çителĕклĕ туянна.

«Сĕнтĕрпуç» колхозри агрокурса райсовет исполкомĕн агрономĕ Кормильцева юлташ ертсе пырать. Çак курсра кăçалхи вĕренÿ çулĕнче 11 заняти ирттернĕ.

Суту-илÿ ĕçĕнчи стахановецсем. Ăстакасси ялповĕ—районти лайăх ĕçлекен ялпосенчен пĕри. Ялпо тавар çаврăнăш планне кашни кварталта тултарса пырать. Кунта культурăллă суту-илÿшĕн тăрăшса ĕçлекен пултаруллă кадрсем сахал мар ÿссе çитĕннĕ. Ăстаккассинчи магазинра ĕçлекен Константинов, Кĕçĕн Ăстакассинчи ларекра ĕçлекен Лукин, Чермăшри ларекра ĕçлекен Захарова юлташсем иртнĕ çулти тавар çаврăнăш планне ирттерсе тултарнăшăн хаклă премисем илнĕ. Вĕсем кăçал та лайăх ĕçлеççĕ. Январь уйăхĕнчи тавар çаврăнăш планне 15 кун хушшинче 90 процент тултарнă.

Кĕскен

Çĕнĕ клубсемпе библиотекăсем. Вăрмар районĕнче иртнĕ çулта «Большевик», «Красная Кубня», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенче çĕнĕ клубсем уçнă. «Труд», «Большевик» тата «Маяк» колхозсенче библиотекăсем ĕçлеме тытăннă. Кăçал çĕнĕрен икĕ клуб, виçĕ библиотека тата виçĕ вулав çуртне уçмалла.

ССР Союзĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче

Январĕн 8-мĕшĕнче США Правительстви Совет Правительствине нота панă. Çав нотăра «вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕ тыткăна илнĕ çĕршер пин нимĕçсемпе японецсене» халĕ те çаплах Совет Союзĕнче усраççĕ тесе элеклесе çырнă. Нотăра çавăн пекех тата: вăрçăра тыткăна лекнĕ çынсем тĕлĕшпе ĕçлеме ООН уйăрнă комисси текенскерне Совет Союзĕн информаци памалла, тесе каланă; ку комиссие США-па Англи хĕснипе, ООН Уставне пăсса, ООН Генеральнăй Ассамблейин 5-мĕш сессийĕ 1950 çулхи декабрьте уйăрнă.

США Правительствин маларах асăннă ноти çине ответлесе, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви январĕн 20-мĕшĕнче США посольствине çакăн пек нота ярса панă:

«Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви вăрçăра тыткăна лекнĕ японецсемпе нимĕçсене Совет Союзĕнчен ярас тĕлĕшпе 1952 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче панă нота пирки Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви СССР посольстви 1950 çулхи июлĕн 16-мĕшĕнче государство департаментне панă нота çинчен тата СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви 1950 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче США посольствине панă нота çинчен аса илтерни кирлĕ, тесе шутлать. Çав нотăсенче ку ыйту пирки татăклă ответ панă.

ООН тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе ĕçлеме уйăрнă комиссин пулас ларăвĕсем çинчен США Правительстви каланине илес пулсан, çав комиссие США-па Англи хĕснипе, ООН Уставне пăсса, туса хунине, вăл законсăр комисси пулнине пурте пĕлеççĕ.

Америкăн маларах асăннă нотине вăл Совет Союзĕ çине элеклени пулать тесе çеç хакламалла. США Правительстви çав элеке нимĕçсемпе японецсен çар преступникĕсен, Германипе Японие вăрçă авантюрине кĕртсе янă, иккĕмĕш тĕнче вăрçине сарса янă çынсен, халĕ США-ри влаçра тăракан ушкăнсем тĕнчери çĕнĕ вăрçă хатĕрлес ĕçе хутшăнтаракан çынсен, айăпне пĕчĕклетсе кăтартас шутпа сарать».

ТАСС 1950 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕнче тата майăн 5-мĕшĕнче официально пĕлтернисенче тыткăна лекнĕ японецсемпе нимĕç çар çыннисене Совет Союзĕнчен ăсатса пĕтернĕ, тесе каланă,—çавна пăхмасăр США Правительстви маларах асăннă нотăна Совет Правительствине ярса панă.

ТАСС апрелĕн 22-мĕшĕнче пĕлтернинче çапла каланă: тыткăна лекнĕ японец çар çыннисене 510.409 çынна Японие ăсатнă, кунсăр пуçне, 1945 çулта çапăçусем пулнă районсенче 70.880 çынна ирĕке кăларнă.

Тыткăна лекнĕ японец çар çыннисем ССР Союзĕнче 1.487 çын çеç юлнă, вĕсене айăплă ĕç тунăшăн судпа айăпланă е вĕсен ĕçне тĕпчесе йĕрлекен çынсем тата сывалнă хыççăн хăйсен тăван çĕршывне ăсатмалли çынсем 9 çын пулнă, вĕсенчен 8 çынна Японие ăсатнă, кунсăр пуçне, Китай халăхне хирĕç пысăк айăп тунă японец çар çыннисем 971 çын тыткăнра юлнă, вĕсене Китай Халăх Республики аллине памалла пулнă.

ТАСС 1950 çулхи майăн 5-мĕшĕнче пĕлтернинче тыткăна лекнĕ нимĕç çар çыннисем тĕлĕшпе çапла каланă: тыткăна лекнĕ нимĕç çар çыннисене мĕн пурĕ 1.939.063 çынна Совет Союзĕнчен ăсатнă. Тыткăна лекнĕ нимĕç çар çыннисенчен Совет Союзĕнче вăрçă вăхăтĕнче хăйсем йывăр айăп тунăшăн судпа айăпланисем 9.717 çын, вăрçă вăхăтĕнче айăплă ĕçсем тунине тĕпчесе йĕркелемеллисем 3.815 çын çеç юлнă тата 14 çынна сывă мар пирки хăварнă, вĕсенчен 11 çынна сывалнă хыççăн Германие ăсатнă.

Çапла ĕнтĕ, ТАСС пĕлтернисенче тыткăна лекнĕ японецсемпе нимĕç çар çыннисем çинчен—Совет Союзĕнчен ăсатнисем тата ССР Союзĕнче юлнисем çинчен те—татăклăн ăнлантарса панă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРКИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС) Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Ĕнер хĕвелтухăçĕнчи фронтра, Янгуран çурçĕртерехре, Америка тинĕс пехотин 1-мĕш дивизийĕн чаçĕсем атакăсем тунă, Халăх çарĕн чаçĕсем хăватлăн хирĕç тăнипе тăшман чаçĕсене хăваласа янă. Çак çапăçура Халăх çарĕн чаçĕсем тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çын ытла вĕлернĕ тата амантнă, унăн çапăçу техникине нумай пĕтернĕ.

Вăтаçĕрти тата хĕвеланăçĕнчи фронтсенче тăшман хăшпĕр çĕрте атакăсем тунă. Атакăсене Халăх çарĕн соединенийĕсем ăнăçлă сире-сире янă, тăшмана сиен кÿнĕ.

ПХЕНЬЯН, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ январĕн 25-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле тăшман атакисене ăнăçлă сире-сире янă тата оборонăра тăрса çапăçнă.

Ĕнер фронтри уйрăм участоксенчи хăшпĕр вырăнсенче пысăк мар çапăçусем пулнă. Халăх çарĕн чаçĕсем тăшман атакисене пĕтĕмпех сире-сире янă.

Хĕвелтухăçĕнчи фронтра тăшман темиçе хутчен те атакăсем тунă, Халăх çарĕн чаçĕсем тăшман атакисене сирсе янă чухне унăн салтакĕсемпе офицерĕсене нумай пĕтернĕ. Тăшманăн 3 танкне пĕтернĕ.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсен отрячĕсем тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, çав самолетсем уннчен, ытти самолетсемпе пĕрле, çĕршывăн хĕвелтухăçĕнчипе хĕвеланăçĕнчи çыранĕсене тапăннă пулнă.

Америка салтакĕсем Корейăра вăрçасшăн мар

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Кроникл» хаçат корреспонденчĕ Стоунменри лагерьтен (Калифорни) çакăн çинчен пĕлтернĕ: ку лагерьтен интервентсен Корейăри çарĕсен пехота чаçĕсем валли çĕнĕрен салтаксем ярса тăраççĕ. Корейăри фронта илсе каяссинчен хăтăлма тăрăшса, кашни уйăхрах сахалтан та 100 салтакран кая мар юриех айăплă ĕç тăваççĕ те хăйсене тĕрмене хуптараççĕ.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, лагерь начальникĕ Мум майор, хăй кăмăлсăр пулни çинчен пĕлтерсе, çапла каланă: «салтаксем океан леш енне каясшăн мар, çавăнпа та вĕсем хăйсене гражданла влаçсем тытса хупчăр тесе юриех айăпа кĕреççĕ. Вĕсем урамра тăракан автомобильсене вăрласа кайнă пек тăваççĕ, полици участокĕсем çывăхĕнче çуртсен чÿречисене çĕмĕреççĕ, арестленĕ хыççăн хăйсем айăплă пулнине йышăнаççĕ. Кун хыççăн вĕсене 30 кунлăха гражданла тĕрмесенче хупса усрама приговор йышăнаççĕ, вĕсене çакă кăна кирлĕ», тенĕ.

Вырăнти тĕрмесенче «салтаксем туллиех», тенĕ Мум. «Вĕсем тĕрмере ларса тухсан, вĕсене каллех океан леш енне ямалли çынсен списокĕсене кĕртеççĕ, анчах вĕсем каллех хăйсене тĕрмене хуптарма тăрăшаççĕ. Вĕсем çавăн пек тумасан тарса пытанаççĕ, пăрахут тухса кайиччен пытанса пурăнаççĕ».

Америка интервенчĕсем Корейăн тыткăнри çар çыннисене хытă асаплантараççĕ тата вĕлереççĕ

Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтерни

ПХЕНЬЯН, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри тĕп телеграф агентстви «Кочжедо утравĕ—вилĕм утравĕ» тесе ят панă пĕлтерÿ пичетленĕ. Унта çав утрав çинче тыткăнри çар çыннисене—Корея Халăх çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсене питĕ тискер условисенче тытса усрани çинчен каласа кăтартнă. Кочжедо утравне тамăк туса хунă, тесе пĕлтерет агентство. Тыткăнри çынсем Америкăн питĕ хаяр тата тискер çыннисене хирĕç темиçе хутчен те восстани тунă. Утрав çине карапсем тыткăнри çар çыннисене малтанхи хут илсе пырсанах, унта тыткăнри çынсене асаплантарасси тата вĕлерессе куллензи йăла пулса тăнă.

Юнайтет пресс агентстви 1951 çулхи сентябрьте Кочжедо утравĕ çинчи тыткăнри çар çыннисем тарăхса çитнипе пăлханни, пăлхав тăватă кун хушши пыни çинчен пĕлтернĕ. Америка çарĕсем пăлхава пусарнă. Тыткăнри çынсене тĕрлĕ майпа асаплантарнă тата хĕнесе пĕтернĕ, 30 çын вилнĕ.

Темĕн тĕрлĕ тискер ĕçсем туни те утрав çинчи тыткăнри çынсен çирĕп шухăшне хавшатма пултарайман, тесе çырать тĕп телеграф агентстви. Хăйсене çакса вĕлерес умĕн тыткăнри çар çыннисем Халăх çарĕн маршне юрланă, Демократиллĕ Корея Халăх Республикине тата Корея халăхĕн çулпуçне Ким Ир Сена чыслаcа ырă суннă. Çавăн чухне Америкăпа Ли Сын Ман палачĕсем пĕтĕмпех урса кайнă, вĕсем тыткăнри çынсене гранатăсемпе пенĕ, штыксемпе чике-чике вĕлернĕ. Кăçалхи январĕн 6-мĕшĕнче утрав çинче çĕнĕ пăлхав пулни, хальхинче унта тыткăнри нумай çынсене вĕлерни çинчен Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ.

ГРĔЦИРЕ СУЛАХАЙРИ ДЕМОКРАТИЛЛĔ ПĔРЛĔХЛĔ ПАРТИН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ СЕКРЕТАРЬНЕ АРЕСТЛЕНĔ

СОФИЯ, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви Афинăри радио сарнă çакăн пек хыпара пĕлтерет: Грецин шалти ĕçсен министрĕ Рентис хушнипе Грецире сулахайри демократиллĕ пĕрлĕхлĕ партин парламентри лидерне тата çав партин генеральнăй секретарьне Гавриилидиса тытса хупнă.

Тĕнчери лару-тăру

ТУНИСРИ ĔÇСЕМ

Тунис халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешет. Тунис халăхне хĕсĕрлес тĕлĕшпе Францин колонири влаçĕсем çĕнĕрен тискер ĕçсем туни çинчен ют çĕршывсен агентствисем пĕлтереççĕ. Тунис патриочĕсене вуншар çынна вĕлерпĕ, çĕршер çынна амантнă. Çĕршыв никама пăхăнмасăр пурăнмалла тăвассишĕн, миршĕн активлă кĕрешекенсене—Тунисри коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн генеральнăй секретарьне Эннафана, «Нео-Дестур» ятлă буржуалла партин лидерĕсене тата профсоюзсен руководителĕсене тĕрмене хупнă. Чылай хуласенче вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă.

Франци колонизаторĕсем терророла ĕçсем тунине хирĕç Тунисри ĕççыннисем наци ирĕклĕхĕшĕн тата хытăрах кĕрешме тытăннипе ответлеççĕ. Франци правительстви тата унăн Тунисри генеральнăй резиденчĕ законсăр ĕçсем тунине хирĕç протестлени Тунисра пĕтĕм çĕршывĕпех сарăлнă. Пур çĕрте те массăллă демонстрацисем пулса иртеççĕ. Пĕтĕм Тунисри ĕççыннисен союзĕ чĕннипе январĕн 18-мĕшĕнче пур çĕрте те забастовкăсем пуçланнă. Кун пирки çĕршывăн хуçалăхĕнче пур ĕçсем те чарăнса ларнă.

Çак кĕрешӳре Тунис халăхĕн пĕрлĕхĕ тĕрекленсе пырать. Тунисри коммунистсен партийĕ çĕршывăн мĕнпур патриочĕсене империализма хирĕç кĕрешме наци фрончĕ тума чĕнсе çыру янă.

Тунис халăхĕн кĕрешĕвĕ Франци влаçĕсен политикине хирĕç пырать. Франци влаçĕсем Тунисра ĕмĕр-ĕмĕрех пуç пулса тăмалли политика тытса пыраççĕ. Парижра Франципе Тунис хушшинчи ыйтусене йĕркелес пирки калаçусем пынă. Ку калаçусем 18 уйăх хушши тăсăлнă. Тунис представителĕсем çĕршыври колониллĕ режима пĕтерме, Тунис çыннисенчен çеç тăракан правительство органĕ тума ирĕк пама ыйтнă. Хальхи вăхăтра Тунисра «Пысăк совет» ятлă орган ĕçлет. Тунисра французсем халăхăн 1/25 пайĕ чухлĕ кăна пулин те, çав совет ĕçĕсене Франци представителĕсем контроллесе тăраççĕ. Франци правительстви Тунис представителĕсен тĕрĕс требованийĕсене сĕмсĕррĕн сирсе янă, çапла вара вăл протекторат тăвасси çинчен тунă килĕшĕве те хисепленменнине кăтартнă, çав килĕшӳре Тунисăн хăй тĕллĕн пурăнма право пуррине ячĕшĕн çеç йышăннă пулнă.

Францири коммунистсен партийĕн заявленийĕнче çапла каланă: «Тунис ыйтăвне ООН-ра пăхса тухма лартнă. Шăпах та çав вăхăтра Франци правительстви Тунис халăхĕн наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăмне пусарма хăтланать. Çапла туса, Франци правительстви колонири де Голль тавра пĕрлешнĕ спекулянтсен ушкăнĕн интересĕсене, Англипе Америкăри вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсен интересĕсене хӳтĕлет. Вĕсем вара Тунисран агрессиллĕ ĕçсен бази туса хума тăрăшаççĕ», тенĕ.

Франципе Америка империалисчĕсем Çурçĕр Африкăри халăхсене хирĕç кавар туни çак фактран курăнать: арабсен çĕршывĕсен представителĕсен ушкăнĕ нумай пулмасть Францин тепĕр колонийĕнчи—Мароккăри лару-тăру çинчен ООН-ра ыйту лартса, ăна пăхса тухма ыйтнă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата вĕсене пăхăнса тăракан çĕршывсен делегацийĕсем Марокко ыйтăвне пăхса тухма килĕшмен, ку ыйтăва пăхса тухас ĕçе пăчлантарса лартнă.

Италири «Аванти» хаçат çырнă тăрăх, Америка империалисчĕсемпе Франци колонизаторĕсем хăйсен килĕшĕвĕнче çакăн пек ĕçсем тăвасси çинчен каланă: Мароккăпа Тунисран стратеги плацдармĕ туса хумалла, унта вĕсем тинĕс-çар тата сывлăш-çар базисем тата ытти çар сооруженийĕсем тумалла, Мароккăра Америкăн 20 пин салтакне вырнаçтарасси çинчен 1950 çулта тунă килĕшӳре каланă ĕçсене Тунисра та пурнăçласа пымалла; США-н Çурçĕр Африкăри стратегиллĕ чĕртаварсене хатĕрлес ĕçри прависене пысăклатмалла, тенĕ.

Ют çĕршывсен хаçачĕсем пĕлтернĕ хыпарсенчен США империалисчĕсен çар ĕç планĕсене Çурçĕр Африкăра васкавлăн пурнăçласа пыни курăнать. Акă мĕншĕн Тунис халăхĕн империалистсене хирĕçле кĕрешĕвĕ вăйланать. Тунисра миршĕн тăракансен юхăмĕ сарăлса пырать.

Тĕнчери миршĕн тăракан халăхсем, çав шутра Францири ĕççыннисем те, Тунис халăхĕ наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнине ырлаççĕ, ăна çав кĕрешӳре пулăшма тăрăшаççĕ.

АНГЛИРИ ФИНАНС КРИЗИСĔ

Англире тата укçана фунт стерлингпа шутлакан çĕршывсенче финанс кризисĕ пулса тăнă. Ку кризисран тухмалли майсене тупас шутпа Лондонра Британи империйĕнчи çĕршывсен финанс министрĕсен конференцине иртнернĕ. Англие пăхăнса тăракан, нацисен пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлемелли туслăхĕ текенскерне кĕрекен çĕршывсенче, Канадăсăр пуçне, укçана фунт стерлингпа шутлаççĕ. Вĕсем хăйсен укça тӳлемелли тата укça илмелли ĕçне Лондон урлă туса тăраççĕ, хăйсен доллар тата ылтăн запасĕсене Англи банкĕсенче усраççĕ.

Англири «Таймс» хаçат çак конференцие укçана фунт стерлингпа шутлакан çĕршывсенче нихçанхинчен те вăйлă кризис пулса тăнă вăхăтра иртнернине палăртнă. Финанс министрĕсен конференцийĕ мĕнле пулса иртни çинчен пĕлтерсе çырнă юлашки хыпара та «укçана фунт стерлингпа шутлакан çĕршывсем умĕнче питĕ вăйлă кризис пуçланас хăрушлăх пурри» йышăннă.

Пĕлтернисенчен çакă курăнать: иртнĕ çулталăкăн юлашки çур çулĕнче укçана фунт стерлингпа шутлакан çĕршывсен парăмĕ 1.528 миллион фунт стерлинга çитнĕ. Çак хисеп вăл ку çĕршывсен 1949 çулхи финанс кризисĕ умĕнхи çур çулта пулнă парăмĕсен хисепĕнчен чылай пысăкрах, ун чухне вĕсен фунт стерлинг хакне çирĕплетес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тумалла пулнă. Англи финанс министрĕ Баттлер укçана фунт стерлингпа шутлакан çĕршывсен ылтăнпа доллар запасĕсем 1951 çулхи юлашки кварталта 934 миллион доллар чухлĕ чакни çинчен, çав запассем 2.335 миллион доллар юлни çинчен пĕлтернĕ.

Хаçатсем çырнă тăрăх, Англи правительстви умне йывăр задача—фунт стерлинг малашне йӳнелсе пырас çуккине шанса тăмалла тăвассишĕн тăрăшас тата укçана фунт стерлингпа шутлакан çĕршывсен укçа парса-илес ĕçри балансĕнче тупăшсемпе расходсене шайлаштарас задача тухса тăнă.

Англи правительстви умĕнче укça енĕпе тăракан йывăрлăхсем çакна пула татах та ытларах ӳсеççĕ. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Британи империйĕнчи чылай çĕршывсене хĕснипе вĕсене укça енĕпе Англие пăхăнса тăнинчен хăтарма, вĕсене Америкăна пăхăнса тăракан çĕршывсем туса хума тăрăшаççĕ. Австрали финанс министрĕ конференцире, сăмахран, Австралипе США хушшинче тӳрремĕнех тачă çыхăнса тăмалли йĕрке тума кирли çинчен каланă.

Англири буржуалла хаçатсем Лондонри конференцире ĕçсем мĕнле пулса пыни çинчен нумай çырнă. Анчах ку хаçатсем Британи империне финанс енĕпе çавăн пек пысăк кризис пуласси патне илсе çитернĕ тĕп сăлтав çинчен нимĕн те шарламан. Финанс кризисĕн тĕп сăлтавĕ—Англи васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлеме тытăннинче, вăрçа хатĕрленес ĕçе вăйлатса пынинче. Çавна пула Англин парăмсене тӳлеме укça çитмест, Англи халĕ хăйĕн таварĕсене урăх çĕршывсене çителĕклĕ таран илсе кайса сутма пултараймасть.

Англири «Дейли уоркер» хаçат, çĕршыв укça енĕпе йывăрлăха кĕрсе ӳкни çинчен çырса, çакна палăртнă: «Англире халĕ мĕн пулса иртнине Хĕвеланăç Европăри капитализмлă кашни çĕршыврах, васкаса хĕçпăшал нумай хатĕрлеме хутшăннă кашни çĕршыврах, курма пулать. Американецсем вара Хĕвеланăç Европăри çĕршывсене хăйсене хӳтĕлеме пултаракан çĕршывсем тăвасшăн пек, анчах, чăннипе, американецсем çав çĕршывсене çаралса юласси патне илсе çитерчĕç».

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ИНДИ ХАЛĂХĔСЕН ТУСЛĂХĔШĔН ТАТА ИКĔ ÇĔРШЫВ ХУШШИНЧЕ СУТУ-ИЛӲ ТĂВАССИШĔН

Нумай пулмасть Бомбейра, тĕнчери çĕршывсен выставки уçăлнă. Ку выставкăна Совет Союзĕ хутшăннă. Унта Совет Союзĕ хутшăннипе Индири общественность, сăмахран, промышленноçпа суту-илӳ ĕçĕнчи çынсем, предприятисен хуçисем хытă интересленеççĕ. Совет Союзĕн павильонне, Китай Халăх Республикин тата халăх демократи çĕршывĕсен павильонĕсене курма пыракансем яланах нумай. Отзывсен кĕнеки çинче совет халăхĕ мирлĕ ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн хавасланнине палăртса çырса хăварнă çырусем нумай.

Выставка уçăлнă май Индири тĕрлĕ партисен тата ыйтусене тĕрлĕ енĕпе çутатакан хаçатсем, Индири промышленноçпа суту-илӳ ĕçĕнчи çынсем, предприятисен хуçисем Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе, экономика кризисĕ нихçан та пулман çĕршывсемпе, суту-илӳ тăвас ĕçре тачăрах çыхăну тытмалла, тесе çыраççĕ. Индире кашни эрнере пĕрре тухакан «Блитц» хаçат çапла çырать: «Инди халăхĕпе правительстви тĕнчери çĕршывсен промышленность выставкине вăл Инди промышленноçне аталантарас ĕçре пулăшнăшăн кăна мар, вăл Китайпа, ССР Союзĕпе тата Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсемпе суту-илӳ тăвас ĕçре тачăрах çыхăнмалли çул-йĕрсе кăтартса панăшăн та ырлас пулать», тесе çырать. Индири буржуазин тĕрлĕ ушкăнĕсен шухăшне палăртакан «Фри пресс Джорнэл» хаçат ССР Союзĕпе суту-илӳ тăвас ĕçе вăйлатмалла, тесе çырать. «Пире Совет Союзĕпе хамăр хушăра суту-илӳ тума чармалла мар», тесе çырать тепĕр хаçат.

Совет Союзĕпе суту-илӳ туни Инди экономикине вăйланма пулăшать, тенĕ Индин суту-илӳ палатин председателĕ Руя. «Хамăр çĕршыва аталантарма пире апат-çимĕç тата машинăсем нумай кирлĕ... Çав вăхăтрах эпир пирĕн таварсене, çурма-фабрикатсене ытларах сутасшăн... Эпир хамăр çĕршывсем хушшинче суту-илĕве вăйлатма пултарсан, ку вара пирĕн хушăри çыхăнусене тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пурăнассине тĕреклетме пулăшĕччĕ», тенĕ вăл.

Нумай пулмасть Азирипе Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен экономики çинчен обзор пичетленсе тухнă. Унта мĕн çырни питĕ интереслă. Обзорта, сăмахран, Азири чылай çĕршывсем США хушнипе васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлес ĕçе туса пыни çав çĕршывсенче пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратнине йышăннă.

Совет Союзĕпе, Китай Халăх Республикипе, халăх демократи çĕршывĕсемпе пĕр тан правалла тата пĕр пек усăллă йĕрке тăрăх суту-илӳ туни Азири çĕршывсемшĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăма пултарать. Çавăнпа ĕнтĕ Индире Совет Союзĕпе Инди халăхĕсем хушшинчи экономикăллă çыхăнусене тата туслăха çирĕплетессишĕн тăрăшакан юхăм анлă сарăлнă.

С. ИВАНОВ.

Египетăн США-ри посолĕ каласа пани

ВАШИНГТОН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Египетăн США-ри посолĕ Рахим-бей США государство секретарĕпе Ачесонпа калаçнă. Кун хыççăн вăл хаçатсен представителĕсене çапла каланă: Египет правительстви шучĕпе, урăх держава акăлчансене Суэц каналĕн зонине оккупацилесе тăрас ĕçре кирек мĕнле пулăшни те, е çавна сăмахпа ырлани те Египета хирĕçле ĕç тата унăн никама пăхăнмасăр пурăнмалли правине хĕсме тапăнни пулать.

Канал патĕнче акăлчансемпе Египет çыннисем пĕр-пĕрне хирĕç çапăçасси халĕ те пулса пырать. «Пирĕн çĕршыври халăхăн шухăш-ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕричченех çавăн пек çапăçусем пулса пырасси чарăнмĕ», тенĕ Рахим-бей. Халăх шухăш-ĕмĕчĕ тени вăл Англи çарĕсене Египетран та, Суданран та кăларса ямаллине пĕлтермест-и, тесе унтан ыйтсан, вăл ку чăнахах та çавна пĕлтерет, тесе ответленĕ.

Рахим-бей хăй Ачесонпа калаçнă чухне «Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи командовани» текенскерне тумалли плана çĕнĕрен пăхса тухса улăштарасси çинчен нимĕнле сĕнĕве те сӳтсе явмани çинчен каланă. «Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи командование» тăвасси çинчен сăмах пуçарнăччĕ, анчах Египет ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Египет халăхĕн шухăш-ĕмĕчĕсене пурнăçличчĕн ку ыйтăва пăхса тухас çукки çинчен тĕмисе хутчен те каларĕ. Çавăнпа та эпĕ ку ыйтупа калаçмарăм, тенĕ Рахим-бей.

Америка самолечĕсем Китай чикки урлă çĕнĕрен вĕçсе каçни çинчен Синьхуа агентстви пĕлтерни

ПЕКИН, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Аньдунран çакăн çинчен пĕлтерет:

Америка самолечĕсем Çурçĕр Хĕвелтухăç Китай чикки урлă çĕнĕрен вĕçсе каçнă, бомбăсем пăрахнă.

Январĕн 19-мĕшĕнче 19 сехетре Америка самолечĕ Ляодун провинцийĕн Цзиань уезчĕ çине вĕçсе пынă, унта Масянькоу ялĕ çине 7 бомба пăрахнă. Бомба пăрахнине пула 3 çурт арканнă тата ытти енĕпе те сиенсем пулнă.

Январĕн 20-мĕшĕнче 14 сехетре Америкăн пĕр самолечĕ Корейăри Пектон хули енчен вĕçсе пырса, Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китай территорийĕ çине 10 километр вĕçсе кĕнĕ.

Январĕн 21-мĕшĕнче 9 сехетре Америкăн 19 самолечĕ Ляодун провинцийĕнчи Куаньдянь уездĕнчи Сыпингай çине вĕçсе пынă, унта разведка туса çӳренĕ. Çав кунах Америкăн тепĕр 8 самолечĕ Китая вĕçсе пынă, Ляодун провинцийĕнчи Аньдун çинче вĕçсе çӳренĕ. Вĕсене зенитнăй тупăсемпе персе хăваласа янă.

Грецири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн политбюровĕн заявленийĕ

СОФИЯ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви Эллас пресс агентствинчен илнĕ хыпара пĕлтерет: Кăçалхи январĕн 21-мĕшĕнче Грецири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн политбюровĕ заявлени пичетлесе кăларнă, ăна Грецире çынсене çĕнĕрен арестленĕ пирки çырнă. Заявленире: Сулахайри демократиллĕ пĕрлĕхĕ партийĕн (ЕДА) руководителĕсем пулма камсене уйăрса лартасси çинчен, Грецири коммунистсен партийĕн руководстви «Демократики» хаçат редакцине кăтартусем пани çинчен тата ытти ĕçсем пирки çырнисем тĕрĕс мар, тенĕ.

«Грецири коммунистсен партийĕ хăйĕн политикине пытарса тăмасть, тенĕ заявленире.—Вăл хăйĕн ĕçпе халăх хушшинче туса пырать. Грецири коммунистсен партийĕн политикине тата ĕçĕсене халăх лайăх пĕлет. Партин политикипе ĕçĕсем вĕсем халăхăн пурнăçри правишĕн, унăн интересĕсене хӳтĕлессишĕн кĕрешесси, пурнăçри правăшăн кĕрешес ĕçре, миршĕн, демократишĕн, пĕтĕмĕшле амнистишĕн тата нацин никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре пĕтĕм халăхăн пĕрлĕхне тума яланах тăрăшасси пулса тăрать».

Тунис халăхĕ наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешет

ПАРИЖ, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Тунисри лару-тăру малалла сивĕчленсе пыни çинчен пĕлтереççĕ. «Юманите» хаçат Тунисри наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăма пусарма Францирен çĕнĕ çар чаçĕсем яни çинчен çырать. Хаçатра çырнă тăрăх, ĕнер Тунисра 25 патриота вĕлернĕ.

Колони влаçĕсем хытă хĕсĕрленине тата терророла ĕçсем тунине хирĕç Тунис халăхĕ наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕве вăйлатнипе ответлет. Сакет Сиди Юссеф хулинче (Алжир чиккипе юнашар) ĕнер шахтерсен демонстрацийĕ пулнă.

Габес, Кеф, Метуна, Эль Хамма тата ытти хуласенче пулнă манифестацисене пиншер ĕççыннисем хутшăннă. Зитун университечĕн нумай студенчĕсем Франци колонизаторĕсен терророне хирĕç протестлесе выçă ларма шут тытни çинчен пĕлтернĕ.

Тунис хулинче трамвайсемпе троллейбуссем полиципе жандармери отрячĕсем хуралланипе кăна çӳреççĕ. Ĕнер Тунис патриочĕсем Франци çарĕн отрядне тапăннă, темиçе салтака вĕлернĕ. Бьеммаль ятлă ялта полици посчĕн çуртне вут тивертсе çунтарса янă.

«Комба» хаçат Франци плантаторĕсем халăх тарăхса кайнинчен хăраса ӳкни, вĕсем хăйсен хуçалăхĕсене пăрахсах полици, жандармери тата çарсем хуралласа тăракан ялсене куçни, пытанса пурăнни çинчен пĕлтерет.

Тунис халăхĕн аслă кĕрешĕвне Францири ĕççыннисем ырлаççĕ, вĕсене пулăшма тăрăшаççĕ. «Юманите» хаçат Марсель портĕнчи рабочисем Туниса каймалли пăрахутсем çине грузсем тиеме килĕшменни çинчен пĕлтерет.

Францири хĕрарăмсен союзĕн бюровĕ республика президенчĕ патне çыру янă, унта вăл Туниса никама пăхăнмасăр пурăнмалли право пама тата Тунис халăхне хĕсĕрлессине тата терророла ĕçсем тăвассине чарса лартма ыйтать.

Тунис халăхĕн кĕрешĕвне ырлаççĕ

ПАРИЖ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Францин колонири влаçĕсем Тунис халăхне хĕсĕрлеме, халăх юнне тăкма çаплах чарăнмаççĕ. Ирхи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Сус, Набель, Хаммаме, Порто-Фарина тата Тунис хулисенче ĕççыннисемпе студентсен демонстрацийĕсем пулнă. Демонстрантсем çине полици каллех пăшалпа пенĕ, 5 çынна вĕлернĕ.

Тунисра темиçе кун хушшинче 35 çынна вĕлерни, темиçе çĕр çынна амантни çинчен «Юманите» хаçат пĕлтерет.

Демократиллĕ хаçатсем Францин колонири влаçĕсем Тунис халăхне полициллĕ мерăсемпе хытă хĕсĕрленине хирĕç, терророла ĕçсем тунине хирĕç прогрессивнăй организацисем протестлесе çырнă çырусене пичетлеççĕ.

Египет шалти ĕçсен министрĕ пресс-конференцире каласа пани

КАИР, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер вырăнти тата ют çĕршывсенчен пынă корреспондентсен пресс-конференцийĕ пулнă. Унта Египет шалти ĕçсен министрĕ Сираг эд-Дин-паша Исмаили хулинчи лару-тăру çинчен, Англин хĕçпăшаллă вăйĕсем агрессиллĕ ĕçсем туни çинчен каласа панă.

Юлашки 4 кун хушшинче хулара Англи çарĕсем законсăр ĕçсем нумай тăваççĕ, тенĕ Сираг эд-Дин-паша. Вĕсен ĕçĕсем—питĕ тискер, этемле мар. «Ку ĕççене нимĕнпе те тӳрре кăларма çук. Ку ĕççене вĕсем Египет çыннисене тавăрас тата вĕсен шухăш-кăмăлне хавшатас шутпа тăваççĕ, вĕсене урăхла хак пама çук. Ас-тăна çухатнă çынсем çеç çавăн пек преступленисем тума пултараççĕ».

Январĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа паянхи кунччченех Англи çарĕсем хулара пурăнакансене килĕсенчен кăлара-кăлара яраççĕ, хĕрарăмсене те нимĕн чухлĕ те хĕрхенмеççĕ, вĕсене тумтирсĕрех урама хăваласа кăлараççĕ, ал айне мĕн лекет, çавна илсе каяççĕ. Англи çарĕсем, танксемпе бронемашинăсем пулăшнипе, хулан пысăк пайне йышăннă, ун тавра йĕплĕ пăралук карнă.

«Агрессорсем тискер ĕçсем тăвакан районсенче хăшпĕр хĕрарăмсемпе ачасене йĕплĕ пăралук тытнă лагерьсене хупнă. Теприсене çар автомашинисем çине тиесе урăх лагерьсене илсе кайнă. Ку хĕрарăмсемпе ачасем мĕнле пурăнни паллă мар», тенĕ Сираг эд-Дин-паша.

Акăлчансем вăйпа ирĕксĕрленипе Египета хăй позицине улăштарттарма е унăн кĕрешӳри çирĕплĕхне хавшатма пултаратпăр тесе шутлаççĕ пулсан, вĕсем йăнăш тăваççĕ. Пачах та урăхла, çав тискерлĕхсем Египет çыннисем хăйсен прависене хӳтĕлессишĕн тата хытăрах кĕрешесси патне кăна илсе пыма пултараççĕ, тенĕ юлашкинчен Сираг эд-Дин-паша.

Хамăр республика тăрăх

„Портной“ артелĕ хорĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. «Портной» промысла артель хорне районти ĕççыннисем лайăх пĕлеççĕ. Вăл вунă çул ытла ĕçлет ĕнтĕ. Хора Анатолий Николаевич Тогаев композитор ертсе пырать.

Репертуарта—ССР Союзĕнчи халăх юррисем, совет композиторĕсем çырнă произведенисем. Хор коллективĕ пысăк ăсталăхпа юрлать. Кружок членĕсем артельте ĕçлекенсем валли, районти культура çуртĕнче, «Водник» клубра, тата кӳршĕри колхозсенче час-часах концертсем параççĕ.

Халĕ, районти художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленнĕ май, хор коллективĕ уйрăмах тимлĕ ĕçлет. Кружок членĕсем артельте ĕçлекенсем валли пысăк концерт пачĕç. Куракансене уйрăмах «Сталин çинчен çырнă кантата», «Мире хӳтĕлеме», «Демократиллĕ çамрăксен гимнĕ» юррăсене ăста юрлани кăмăла кайрĕ. Пĕччен тухса юрлакансем те пулчĕç. Куракансем концерт участникĕсене чĕрен тав турĕç.

Хор коллективĕ Кукашне ялĕнчи хор кружокне шефа илчĕ. Вăл хăйĕн пахă опычĕпе, ăсталăхĕпе ялти хор кружокĕн членĕсене паллаштарать.

Кукашнери колхоз хорне пулăшма А. Н. Тогаев композиторпа Фальченко баянист тăтăшах унта пырса каяççĕ.

Хор коллективĕ Чăваш АССР-ĕ 30 çул тултарнă ятпа иртнернĕ халăх творчествин республикăри олимпиадинче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Хор коллективне Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен управленийĕн тата культурăпа çутĕç учрежденийĕсен управленийĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

«Портной» артелĕн руководителĕсем тата парти организацийĕ хор кружокĕн ĕçĕпе кулленех интересленеççĕ, ĕçре тивĕçлĕ пулăшу параççĕ. Çавăнпа та артельте ĕçлекенсем хор кружокĕн ĕçне активлă хутшăнаççĕ.

П. ЗАЙЦЕВ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Портной» артелĕн хор коллективĕ Украина халăх юррине юрласа-ташласа парать.

Аэроклубра

1931 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче ВЛКСМ IX-мĕш съезчĕ, К. Е. Ворошилов сĕннипе, темиçе миллионлă комсомол ячĕпе Совет Союзĕн Сывлăш-Çар вăйĕсене шефа илме йышăннă.

Ворошилов сĕнĕвне хĕрӳллĕн ырласа, съезд Сывлăш-Çар вăйĕсенчи мĕнпур боецсемпе командирсене, политработниксене тата Совет Союзĕнчи мĕнпур комсомолецсене чĕнсе каланине йышăннă.

ВЛКСМ IX-мĕш съезчĕ «Комсомолец — самолет çине!» тесе чĕнсе калани совет çамрăкĕсен паттăр лозунгĕ пулса тăчĕ. Комсомолăн нумай пин ывăлĕсем авиацине кайса тĕрлĕ специальноçсене вĕренеççĕ. Арçын ачасемпе хĕрачасем авиаци ĕçне вĕренсе пилот, парашютист, планерист специальноçне туянчĕç.

Комсомол Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн паттăрлăхне, вăл Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратнине лайăх кăтартрĕ. Николай Гастелло капитан-летчика комсомол пăхса çитĕнтернĕ. Вăл хăйĕн çунакан самолечĕпе тăшман техники çине пырса кĕнĕ, çамрăк пурнăçне Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, халăх телейĕшĕн панă. Çĕрле, сывлăшри çапăçура тăшман самолетне çапса ӳкернĕ Виктор Талалихина кам пĕлмест пулĕ.

Комсомол пăхса ӳстернĕ пиншер летчика Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Вĕсенчен паттăррисенчен те паттăррисем—Александр Покрышкинпа Иван Кожедуб вăл хисеплĕ ята виçĕ хут илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Пирĕн аэроклуб воспитанникĕсем те Аслă Отечественнăй вăрçăра паттăррăн çапăçрĕç. Аэроклуб воспитанникĕ пулнă Георгий Паршин—Совет Союзĕн Геройĕ ятне икĕ хут илнĕ. Аэроклубра пилот специальноçне илнĕ Казаков, Сапожников, Тухланов, Карпеев, Захаров, Герасимов тата ытти чылай воспитанниксем Совет Союзĕн Геройĕсем пулчĕç.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче ленинла-сталинла комсомол Сывлăш-Çар флотне тĕреклетессишĕн çĕнĕ вăй-хăватпа ĕçлет. Вăл—çара, авиацие, флота пулăшакан ирĕклĕ обществăн активлă членĕ, авиаци спортне чунтан юратаканĕ.

Совет авиацийĕн çитĕнĕвĕсене тата авиаци пĕлĕвĕсене пропагандăлас тĕлĕшпе Досааф обществи пысăк ĕçсем туса иртерет. Пиншер çамрăксем кружоксенче, курссенче, шкулсенче, аэроклубсенче авиаци пĕлĕвĕсене туянаççĕ.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви, аслă Сталин çамрăксене аэроклубсенче вĕренсе пилот, парашютист, планерист специальноçĕсене илме, авиаци спортсменĕсем пулма пур условисем те туса параççĕ.

Иртнĕ çулта аэроклубран вĕренсе тухнисенчен чылайăшĕ спортсмен-пилот, спортсмен-планерист, спортсмен-парашютист ятне илчĕç. Самолет, планер çинче вĕçес, парашютпа сикес енĕпе ăмăртусем иртнернĕ.

Ăмăртусенче мала тухнă виçĕ спортсмена СССР Досаф Центральнăй Комитечĕн председателĕн приказĕ тăрăх «Аэроклуб чемпионĕн» ятне панă. Вĕсене СССР Досаф Центральнăй Комитечĕн Хисеплĕ грамотисемпе тата «СССР Досафĕн аэроклубĕсен чемпионĕ» значокпа наградăланă.

Вĕсенчен аэроклуб инструкторĕ П. Горбачевский юлташ авиацинче 15 çул ĕçлет, вăл планеристсемпе пилотсем чылай хатĕрленĕ.

Аэроклубра вĕренекенсем хушшинче — институт, техникум студенчĕсем, рабочисемпе служащисем те сахал мар.

Пирĕн аэроклубра опытлă преподавательсем ĕçлеççĕ. Вĕсем çамрăксене хăйсен авиаци пĕлĕвĕсене парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

В. КУДРЯШОВ,
республикăри аэроклуб начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Студентсен хĕллехи каникулĕ

1951—1952 çулхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çур çулне ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн, студентсен хĕллехи каникулĕ пуçланчĕ. Çĕршыври ытти çĕршер пин студентсемпе пĕрлех Чăваш государство педагогика институтĕнче вĕренекен студентсем каникул кунĕсене савăнăçлă та культурăллă иртереççĕ.

Институтри комсомол организацийĕ ертсе пынипе студентсем хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем хушшинче тĕрлĕрен лекцисемпе докладсем, калаçусем иртереççĕ. Çак ĕçе çĕршер студента хутшăнтарнă. Вĕсем наукăпа техника тата политика, литературăпа чĕлхе ыйтăвĕсемпе лекцисемпе докладсем тата калаçусем иртереççĕ. Нумай студентсем: «Совет Союзĕ миршĕн кĕрешес ĕçре», «Наука тата тĕн», «Коммунизмăн аслă стройкисем», «Мир геми чăваш литературинче» темăсем тăрăх лекцисем хатĕрленĕ.

Институтри физвоспитани кафедри республикăри колхозсемпе шкулсене кайма йĕлтĕрçĕсен икĕ командине тунă. Пĕр команди Шупашкар, Ишлей, Муркаш, Советски районĕсенчи колхозсенче пулса ĕççыннисемпе шкул ачисем хушшинче физкультурăпа спорт тата ытти ыйтусемпе çыхăннă докладсемпе калаçусем иртерет. Вĕсем вăтам шкулсенчен вăçал вĕренсе тухакан çамрăксене института вĕренме кĕмелли çĕнĕ условисемпе паллаштараççĕ. Йĕлтĕрçĕсен тепĕр ушкăнĕ Ишеке кайса колхозра пулса иртекен ăмăртусене хутшăнать, ĕççыннисем хушшинче калаçусем иртерет.

Январĕн 26—27-мĕш кунĕсенче Шупашкарта пулса иртекен республикăри студентсен хĕллехи 3-мĕш спартакиадине хутшăнма институтри чи вăйлă 32 спортсменран 5 команда тунă.

С. АШМАРИН.
Н. ГРИГОРЬЕВ.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительствин пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

ИТ 00605 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.